24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ЯНВАРЬ
13
ЫТЛАРИКУН
10(6035) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ССР Союзĕн Совнаркомĕнче

Наукăпа изобретени, искусствăпа литература тĕлĕшĕпе 1941 çулта тунă паллă ĕçсемшĕн Сталинла премисем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. СССР Совнаркомĕ 1939 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче йышăннă постановлепие улăштарса, 1941 çул валли Сталинла премисен хисепне çакăн пек тăвас:

а) Наука тĕлĕшпе тунă паллă ĕçсемшĕн наукăн çакăн пек отраслĕсене кашнине валли ПĔРРЕМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ икшер преми 200 пин тенкĕлĕх, ИККĔМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ икшер преми 100 пин тенкĕлĕх:

1) Физикăпа математика наукисем,
2) Техника наукисем,
3) Хими наукисем,
4) Геологипе географи наукисем,
5) Биологи наукисем,
6) Ялхуçалăх наукисем,
7) Медицина наукисем,
8) Экономика наукисем (ку шутах статистика та кĕрет),
9) Çар наукисем,
10) Историпе филологи наукисем,
11) Философи наукисем,
12) Юридически наукăсем.

б) Искусство тĕлĕшпе тунă паллă ĕçсемшĕн искусствăн çакăн пек тĕслĕхĕсене кашнине валли ПĔРРЕМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ икшер преми 100 пин тенкĕлĕх, ИККĔМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ икшер преми 50 пин тенкĕлĕх:

1) Музыка,
2) Живопись,
3) Скульптура,
4) Архитектура,
5) Театрпа драма искусстви,
6) Опера искусстви,
7) Балет искусстви,
8) Художествăллă кинематографи,
9) Хроникăпа документсен кинематографийĕ,

в) Литература тĕлĕшпе тунă паллă произведенисемшĕн литературăн çакăн пек тĕслĕхсене кашнине валли ПĔРРЕМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ икшер преми 100 пин тенкĕлĕх, ИККĔМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ икшер преми 50 пин тенкĕлĕх:

1) Поэзи,
2) Проза,
3) Драматурги,
4) Литература критики.

г) Паллă изобретенисемшĕн (ку шутах çар ĕçĕнчи изобретенисем те кĕреççĕ):

ПĔРРЕМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ вунă преми, кашни премийĕ 100-шер пин тенкĕлĕх;

ИККĔМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ çирĕм преми, кашни премийĕ 50-шар пин тенкĕлĕх;

ВИÇÇĔМĔШ СТЕПЕНЬЛĔ вăтăр преми, кашни премийĕ 25-шер пин тенкĕлĕх.

2. 1941 çулшăн Сталинла премисем панă чухне çĕршыв оборонипе çыхăнса тăракан ĕçсемпе изобретенисене пысăкрах хак памалла.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Танковăй батальон командирне капитан А. А. Рафтопулло юлташа Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн танковăй батальон командирне Анатолий Анатольевич Рафтопулло капитана, ЛЕНИН орденĕ тата «Золотая Звезда» медаль парса, Совет Союз Геройĕн званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти январĕн 11-мĕш.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

107-мĕш мотострелковăй дивизирен тата 8-мĕш танковăй бригадăран гвардейски чаçсем тăвасси çинчен

Пирĕн Советлă Тăван çĕршывшăн, фашистла захватчиксене хирĕç пыракан нумай çапăçусенче 107-мĕш мотострелковăй дивизи тата 8-мĕш танковăй бригада хăюллă та паттăр пулнине, дисциплинăллă тата организованно пулнине кăтартрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, 107-мĕш мотострелковăй дивизи тата 8-мĕш танковăй бригада фашистла войскăсене çавтери пысăк çухатусем кӳчĕç, противник салтакĕсемпе офицерĕсене 20 пин çынна ытла пĕтерсе тăкрĕç, çавтери нумай трофейăсем тытса илчĕç.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă та организованно пулнăшăн çакăнта кăтартнă дивизипе бригадăран гвардейски чаçсем тунă. Уйрăмăн илсен:

1) 107-мĕш мотострелковăй дивизирен—2-мĕш гвардейски мотострелковăй дивизи—дивизи командирĕ полковник П. Г. ЧАНЧИВАДЗЕ.

2) 8-мĕш танковăй бригадăран—3-мĕш гвардейски танковăй бригада—бригада командирĕ полковник П. А. РОТМИСТРОВ.

Асăннă дивизипе бригадăна гвардиялавĕсем парӑççĕ.

Комсомолецсем ялхуçалăх машинисене тĕрĕслес ĕçре

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн решенийĕ тăрăх, декабрĕн 25-мĕшпе январĕн 25-мĕш хушшинче ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене тĕрĕслес тĕлĕшпе уйăхлăх пулса иртет. Çав уйăхлăха пирĕн республикăри комсомол организацийĕсем те хутшăнчĕç.

Çак кунсенче ВЛКСМ обком бюровĕ уйăхлăх мĕнле пыни çинчен ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райком секретарĕн Юричев юлташăн докладне итлерĕ.

Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райкомĕ активран 36 çынна ялсене кăларса янă. Январĕн 5-мĕш тĕлне районри 36 колхозра тĕрĕслӳ пулса иртнĕ. Малта пыракан организацисенчи комсомолецсем, уйăхлăха хутшăнса, ялхуçалăх машинисене тĕрĕслес ĕçе активлăн тытăннă. Нарат-Чаккинчи «Малалла» колхозра ялхуçалăх машинисем тĕрлĕ çĕрте сапаланса выртнă пулнă. Темиçе плуг уйрах ларнă. Комсомолецсем вĕсене хӳтĕ çĕре, сарайне пуçтарса лартнă. Мало-Камаево колхозĕнче ялхуçалăх машинисем тĕлли-паллисĕр, плугсем кустăрмисемсĕр сапаланса выртнă. ВЛКСМ райкомĕн представителĕ Красовский юлташ, ялти комсомолецсене, шкул ачисене ертсе тухса, машинăсене пуçтарса йĕркелесе кĕртсе лартнă.

Анчах районри чылай организацисем уйăхлăха хутшăнса ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене тĕрĕслесе юсас ĕçе тытăнман-ха. Хăшпĕрисем тата машинăсене, тĕрĕсленĕ вăхăтра колхозсене çителĕклĕ таран практикăллă пулăшу парса хăвармасçĕ, ĕçри çитменлĕхсем çинчен çырса кăна тухаççĕ. Нумай çĕрте ялхуçалăх машинисене сарайсене пуçтарса кĕртсе хупнипех лăпланнă.

Тракторсене юсас тĕлĕшпе МТС сумĕнчи комсомол организацийĕ те начар ĕçлет. Ку ĕçе районри комсомолец-трактористсенчен 19 çынтан 8 çын кăна хутшăннă.

ВЛКСМ чăваш обкомĕн бюровĕ Сĕнтĕрвăрри ВЛКСМ райкомĕн бюровне ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ирттерекен уйăхлăх районра начар пыни çинчен асăрхаттарса хăварчĕ. Уйăхлăха мĕнле ирттерес тĕлĕшпе тĕплĕнрех шухăшласа пăхса план тума хушрĕ. Уйăхлăх вăхăтĕнче, унтан кайран та мĕн ĕçе пĕтериччен выранти комсомолецсене практикăллă пулăшу парса пыма райком бюровĕпе пленум членĕсене, актива уйрăм организацисем çумне çирĕплетме сĕннĕ.

Обком бюровĕ ВЛКСМ райкомĕсене ятарласа ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем организацилеме сĕнчĕ. Çавăн пекех обком бюровĕ ВЛКСМ райкомĕсене МТС-сенчи трактористсене машинăсене юсас ĕçе анлăн явăçтарма хушрĕ. Тепĕр чухне машинăсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен çамрăк рабочисене кӳршĕри колхозсене пулăшма ярассине те йĕркелемелле. Машинăсен, инвентарьсен йывăç пайĕсене тăвас ĕçе ялти çамрăксене, шкул ачисене явăçтармалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 10-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Январĕн 9-мĕшĕнче нимĕçсенне 42 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 8-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсенне 5 танк, пехотăпа груз турттарса пыракан 500 ытла автомашина, 8 орудие прислугипе пĕрлех, боеприпассем тиенĕ 200 лава, горючи тултарнă 3 автоцистерна, зенитнăй пулеметсен 16 точкине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 40 вагона çунтарса янă, боеприпассен 2 складне взрыв туса сирпĕтернĕ, противник пехотин 4 батальонне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Фирсов юлташăн чаçĕ, противник вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 3 пысăк пункта йышăнса илнĕ тата нимĕçсенне 89 автомашина, 5 оруди, 8 мотоцикл, радиостанци, 116 пин патрон тата снарядсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн летчиксем тăшманăн К. пунктăн районĕнче тăракан аэродромĕ çинe тапăнса, нимĕçсенне çĕр çинче 18 самолет тата çĕр çине анса ларнă чухне 3 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтерсе тăкнă самолетсен шутĕнче «Мессершмитт—109» йышши самолетсем—10, «Юнкерс—88» йышши самолетсем—2 тата «Хейнкель—126» йышши самолетсем 6 пулнă.

* * *

Кăнтăр Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть халăх пурăнакан З. пункт çине çĕрле пырса тапăнса нимĕçсенне 2 оруди, 6 пулемет, 4 миномет, пĕр пине çити снаряд тата 1500 мина тытса илнĕ. Çапăçу хирне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын вилсе юлнă.

* * *

Мускав облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче учитель Н. юлташ ертсе пынипе кĕрешекен партизансен отрячĕ, противникăн пехоти ларса пыракан 7 грузовой автомашинăна, 2 çăмăл автомашинăна, мотоцикл, горючи тултарнă автоцистернăна, грузсем тиенĕ 2 лава, пĕр орудие тата ăна турттакан трактора пĕтерсе тăкнă, питех те пысăк выран йышăнса тăракан çул çинчи кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ. Нимĕçсен телефон çыхăнăвне нумай хутчен пăсса тăкнă, çав вăхăтра отряд 3000 метр тăршшĕ провод татса илнĕ. Партизансем хăйсен паттăр çапăçăвĕсенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене çĕр çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Германи полковникĕ Шитниг нимĕçсен 512-мĕш пехотнăй полкне панă приказа пирĕн чаçсем тытса илнĕ. Фашистла вăрă-хурах Шитниг хăйсем каялла чакса пынă чухне çул çинче тĕлпулакан советсен ялĕсемпе хулисене çаратса тата çĕмĕрсе тăкмалли çав тери ирсĕр те сĕмсĕр программа хатĕрлесе хунă. Çав приказра «ялсене ишĕлтермелли тата халăх пурăнакан пунктсене пĕтерсе тăкмалли» меслетсене анлăн палăртса хунă.

Приказра çапла каланă: «Хĕлле вырнаçса тăмалли условисене лайăхлатас тĕлĕшпе, çĕмрĕк ялсенчен пурне те илсе тухма приказ паратăп: апат-çимĕç продукчĕсем, çĕрулми, вир кĕрпи, сухан, хăяр, тутлă апат-çимĕçсем, краççин, кĕленче, пăта, çатмасем, тӳлмексем, краççин ламписем, пукансем, витресем, михĕсем, вĕренсем тата лаша витисен оборудованийĕсем». Çапла вара, çаратса пурăнма вĕренсе çитнĕ нимĕç мародерĕсемпе вăрă-хурахĕсем, совет хулисемпе ялĕсенти мирлĕ пурăнакан халăха пĕтĕмпех çаратса тухмалли çинчен хăйсен начальникĕсенчен тӳремĕнех приказ илсе тăнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче вĕлернĕ обер-ефрейтор Франц Вальбрун çумĕнче вăл хăйĕн тăванĕсем патне çĕнĕ çул ячĕпе çырса хунă, анчах ярса ĕлкĕреймен çыру тупнă. Вальбрун çапла çырать: «Салтаксем кунта хăйсен урисемпе аллисене тата хăлхисене мĕнле тăм илтерсе янине кашни кунах куратăп. Нумаях пулмасть пирĕн батарейăран пĕрин командирĕ урине тăм илтерсе янă. Халĕ вăл лазаретра выртать. Унăнне икĕ урине те касаççĕ пулмалла. Çакăн пек ĕçсем кунта пирĕн пĕр çынпа çеç мар, çĕршер те пиншер салтакпа пулса иртеççĕ. Ĕнер эпĕ виçĕ юлташпа темĕнле лаç пек выранта çĕр каçса ирттертĕм. Унта вара ăшă выран пулчĕ. Çĕрле пирĕн пата 10 салтак пырса кĕчĕ. Выртса çывăрма май пулман пирки эпир çĕрĕпех ура çинче тăрса ирттертĕмĕр, хĕллехи сивĕ нумайĕшĕсен пурнăçне пĕтерсе лартать. Январьпе февраль уйăхĕсенче хальхинчен те сивĕрех пулать. Манăн халлĕхе пурнăç аван пырать-ха. Эпĕ ку таринччен урари икĕ пысăк пӳрнесене çеç тăм илтернĕ. Ку ытла начарах мар-ха. Эпир тата 30 километр каялла чакрăмăр. Ку вара пире питех те хакла ларчĕ. Мĕн чухлĕ орудисемпе автомашинăсем пăрахса хăвармарăмăр-ши унта? Раштав ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн пата эсэсовецсен 4 роти самолетпа вĕçсе çитрĕ. Вĕсем пырса çитсен тепĕр икĕ сехет иртсенех вĕсене çапăçăва кĕртсе ячĕç. Вĕсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ пекех ĕнтĕ нихăçан та раштав праçникне уявлаймĕç. Вырăссем вĕсене çĕмĕрсе тăкрĕç».

* * *

Прага хулинчи полици управленийĕ (Чехословакия) нимĕç çарĕсене ăшă тумтир памасан хула çыннисене çакса вĕлермелле пуласси çинчен çурт хуçисене асăрхаттарса хунă. Январĕн 7-мĕшĕнче çуртйĕр тытса пурăнакан 10 çынна гестапона чĕнсе илнĕ, вĕсене хытă хĕненĕ тата вĕсем çитес çывăх кунсенче хăйсен мĕнпур ăшă тумтирĕсене нимĕçсене памасан, вĕсене персе вĕлермелле пуласси çинчен, вĕсен çурчĕсене конфискацилемелле пуласси çинчен асăрхаттарса хунă. Чехословакири чылай хуласенче урампа иртсе пыракан чехсен ăшă тумтирĕсене нимĕç салтакĕсем хывса илме пуçланă та ĕнтĕ.

* * *

Фохт хулинче (Германия) пурăнакан çынсене çăкăр выранне çăнăх пек япала панă хыççăн хулари çынсем наркăмăшланса массăллăн вилме пуçланă.

* * *

1941 çулти декабрĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа Совет Союзĕнчи ĕççыннисем çĕршыв оборонин фондне 1 миллиард та 396,3 миллион тенкĕ укçан, 1 миллиард та 607 миллион тенкĕлĕх государство заемĕсен облигацийĕсене тата платина, ылттăн, кĕмĕл, ытти хаклă япаласем нумай пухса панă. Çавăн пекех çĕршыв оборонин фондне ялхуçалăх продукчĕсем те питĕ нумай парӑççĕ. Колхозниксем пĕтĕмпе 21.501 тонна тĕштырă, 11.780 тонна кайăк-кĕшĕкпе выльăх-чĕрлĕх, 10.310 тонна сĕт-çу продукчĕсем, 5.685 тонна çĕрулмипе тымар çимĕçсем панă.

Январĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противникăн çирĕплетнĕ пунктĕнчен тавра çавăрăнса кайса, унта пулнă нимĕçсене кĕтмен çĕртен пырса çапса аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла вилсе юлнă. Пирĕн боецсем противникăнне 2 танкетка, виçĕ оруди, 12 пулемет, ручной гранатăсем тултарнă 20 ещĕк тата снаряжени турттарса пыракан 5 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Красноармеец-разведчик Якубович юлташ икĕ боецпа пĕрле противник вырнаçса тăракан С. хули районне кĕрсе кайнă. Паттăр разведчиксем нимĕç штабĕн автобусне тĕлпулнă та ун çине гранатăсем ывăтнă. Çавăнтах вĕсем нимĕçсен икĕ офицерне вĕлернĕ тата штабăн хаклă докуменчĕсене, вăрçăри оперативнăй обстановкăна паллă туса хунă карттăна тытса илнĕ. Каялла таврăнакан паттăр разведчиксем нимĕçсен транспортнăй машинисене тĕл пулнă. Нимĕçсен хуралне вĕлерсе, разведчиксем тăшманăн боеприпассем тиенĕ тата орудисем кăкарса янă виçĕ транспортнăй автомашинине тытса илнĕ.

* * *

Красноармеец Тацко юлташ противника хирĕç штыкпа çапăçса нимĕçсен снайперне тата фашистсен икĕ офицерне чиксе вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсем Ефремов хулине йышăнса тăнă чухне сивĕ те чĕрĕ подвала аманнă красноармеецсене 52 çынна хупнă. Унта вĕсене нимĕнле апат-çимĕç те, медицина енчен нимĕнле пулăшу та паман. Хулара пурăнакан çынсене персе вĕлерессипе хăратса, красноармеецсене пачах та пулăшу партарман. Анчах совет патриочĕсен — Горшковсен çемьи вилĕмрен хăраса тăман, совет боецĕсене çăлса хăварас ĕçе вăл хăй çине илнĕ. Любовь Васильевна аманнă боецсен суранĕсене вăрттăн çыхса янă, Федор Иванович хăйĕн ĕнине пусса боецсене валли апат-çимĕç хатĕрленĕ, вĕсен ачисем Владимирпа Владислав аманнă боецсене апат леçсе парса тăнă. Çапла вĕсем Ефремов хулине пирĕн войскăсем нимĕçсенчен ирĕке кăлариччен красноармеецсене тăрăшса пăхнă. Горшковсен çемьи геройлăх кăтартса ĕçленине пула Хĕрлĕ Çарăн 52 боецне вилĕмрен çăлса хăварнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи Остров ялĕнче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем инвалидсен çуртне аркатса тăкнă. Вăл çуртра вăрçăпа ĕç инвалидĕсем 622 çын пурăннă. Фашистла громилăсемпе мародерсем инвалидсен пĕтĕм апат-çимĕç продовольствине çаратса кайнă тата унти пулăшусăр тăрса юлнă старииксен ăшă тумтирĕсене туртса илнĕ. Фашистсем Остров ялĕнче уйăх çурă хуçаланса пурăннă. Çав вăхăт хушшинче инвалидсенчен 100 çын выçăпа вилнĕ. Каялла чакас умĕн нимĕçсем инвалидсен çуртне вут тĕртсе янă. Çуртăн виçĕ корпусĕ пĕтĕмпех çунса кайнă. Çав пушарта инвалидсенчен 25 çынран кая мар пĕтнĕ.

* * *

Германире январь уйăхĕшĕн апат-çимĕç продовольствисен нормисене татах чакарнăшăн чылай хуласенче пăлханусем пулса иртеççĕ. Лейпцигра гитлерла влаçсене хирĕç уççăнах тухса каланă хĕрарăмсен ушкăнне полици тытса арестленĕ.

* * *

Алтай крайĕнчи колхозниксем 1942 çулта акмалли çĕр лаптăкне 316.000 гектар пысăклатаççĕ. Тĕштырă акмалли çĕр лаптăкĕ 182.500 гектар ӳсет. Техникăллă культурăсене иртнĕ çултинчен 70.300 гектар ытларах акса хăвармалла пулать. Сахăр кăшманĕ акса хăвармалли çĕр лаптăкĕ те пĕрре çурă ытларах ӳсмелле.

Январĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 11-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем, нимĕçсем хирĕç тăнă выранĕсене çавăрса илсе тата пĕтерсе тăкса, малалла куçса пынă. Противник çынсемпе хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсет. Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан темиçе пункта, çав шутра Людиново хулине тата чугунçулсем пĕрлешекен Тихонова Пустынь ятлă пысăк станци тытса илнĕ.

Январĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсенне 11 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 10-мĕшĕнче пирĕн авиачасть нимĕçсенне 3 танк, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 100 автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 75 лава, минометсен батарейине, зенитнăй пулеметсен 2 точкине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи эшелона çунтарса янă, противник пехотин батальонне сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Мосальск хулине йышăннă чухне пирĕн пĕр часть нимĕçсен 316-мĕш тата 406-мĕш пехотнăй полкĕсенчи 2 батальона вĕлерсе пĕтерсе, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла тыткăна илнĕ. Питĕ нумай трофейăсем, вăл шутра 20 оруди, 61 автомашина, 25 мотоцикл, темиçе пин снаряд тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн утлă гвардеецсем (Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсен чакса пыракан чаçĕсен тылне ăнăçлă рейд тунă. Кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, тăшманăн чакмалли çулĕсене татса илсе, совет кавалеристĕсем 5 кун хушшинче халăх пурăнакан 19 пункта гитлеровецсенчен ирĕке кăларнă, нимĕçсенне 23 танк, 82 оруди, 379 грузвой тата 40 çăмăл автомашина, 23 миномет, 52 станковăй пулемет, 260 ытла автомат тытса илнĕ тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1300 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противника хирĕç пĕр кун хушши хаяррăн çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 9 дзота аркатса тăкнă, тăшманăнне 3 танк, 10 автомашина тата 1 зенитнăй оруди пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Тимошенко нимĕçсен блиндажĕ патне системĕсĕр шăвăнса пынă та, граната тĕл пăрахса, тăшманăн 5 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Тула хулинчи рабочисен партизанла отрячĕ нимĕçсен дивизийĕн Л. ялне вырнаçнă штабĕ çине пырса тапăннă. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Ялтан инçех те мар партизан-разведчик Ч. юлташ, нимĕçсен разведкине тĕл пулнă та хăйĕн автоматĕнчен персе 8 фашиста пĕтерсе тăкнă. Д. ялĕнче партизансем нимĕç офицерĕсем çывăрма кĕрсе выртнă 3 çурта вут тивертсе янă. Чӳречесенчен сике-сике тухакан нимĕçсене партизансем гранатăсем пăрахса пĕтерсе пынă. С. ялĕнче партизансем тăшманăн боеприпассем тиенĕ 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нумаях та пулмасть отряд нимĕçсен продовольстви турттарса пыракан обозĕ çине тапăннă. Фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 10 çынна пĕтерсе тăкса, партизансем обоза тытса илнĕ.

* * *

«Норд» ятлă 9-мĕш полкри 9-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Александр Зомбер çапла каланă: «Кестеныгск енче кĕрешекен 9-мĕш полкри 10 салтак Хĕрлĕ Çар енне куçмашкăн пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă. Вĕсем мĕнпур ушкăнĕпе тыткăна парăнма май килессе çеç кĕтнĕ. Ротăри пĕр шпион вĕсем çапла калаçлани çинчен офицера каласа панă. Çав кунах салтаксен 10-не те персе пăрахнă».

* * *

Мускав облаçĕнчи Лопасински районри Леоново ялне нимĕçсенчен тытса илсе ирĕке кăларнă хыççăн пĕр сарайĕнче урисенчен çакса янă пĕр çамрăк çыннăн виллине тупнă. Çав çамрăк çынна гитлеровецсем çавтери тискеррĕн асаплантарса, унăн ӳт-пĕвĕ çинче çăлтăрсем касса кăларнă, пĕçертсе, хĕнесе юхăнтарса пĕтернĕ пулнă.

* * *

Нимĕçсен Финляндири войскисем Финлянди халăхĕнчен выльăх-чĕрлĕхсене вăйпах туртса илеççĕ, халăх валли хатĕрленĕ какая хăйсем валли пухса илсе каяççĕ. Çакăн пирки Финлянди министрĕ Фагерхольм пичет представителĕсене çапла каланă: «Финляндире продовольстви тĕлĕшпе лару-тăру япăхланнăçемĕн япăхланса пырать», тенĕ. Январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа халăха памалли какай нормине икĕ хут чакарни çинчен пĕлтернĕ. Анчах та ку нормăсем хут çинче çеç палӑраççĕ, чăннипе финсем «какай илменни нумай пулать ĕнтĕ» тесе палăртма тивнĕ министрăн ирĕксĕрех.

* * *

Литвари, Латвири тата Эстонири халăхсенчен нимĕçсем Германи çарĕ валли ăшă япаласене вăйпах туртса илеççĕ. Балтика тинĕсĕ таврашĕнче пурăнакан халăхсем хăйсенчен нимĕç салтакĕсем валли тесе туртса илнĕ ăшă пальтосене штурмовой отряд командирĕсен тата гитлерла ытти чиновниксен арăмĕсем е еркĕнĕсем тăхăнса çӳренине курса тăраххаççĕ.

* * *

Грузири колхозницăсем уйхир ĕçĕнче Хĕрлĕ Çара кайнă арçынсем выранне ĕçлеме хатĕрленеççĕ. Ку таранччен трактористсен курсĕнчен 1.128 хĕрарăм вĕренсе тухнă. Хальхи вăхăтра курсенче татах 237 хĕрарăм вĕренет.

Январĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем фронтăн чылай участокĕсенче активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Катуков юлташăн чаçĕ (Хĕвеланăç фрончĕ), противника халăх пурăнакан пунктран çапса кăларса, тăшман пехотин батальонне пĕтерсе тăкнă. Ремизов юлташăн чаçĕ В. пункт патĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче противник пехотин икĕ ротине вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Федюнинский юлташăн чаçĕсенчен пĕри (Ленинград фрончĕ), палăртса хунă операцие ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе, 240 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, противникăнне 4 пулемет, 6 оруди тытса илнĕ, нимĕçсен 6 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн пĕр часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) икĕ кун хушшинчи çапăçусенче противник артиллерийĕн 2 батарейине, минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2.500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Танкист-лейтенант Цибулькин, хăйĕн танкĕн тупписенчен персе тата гусеницисемпе таптаттарса, противникăн танксене хирĕç перекен 3 орудине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 40 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Отделени командирĕ Зарубин юлташ, хăйĕн боецĕсемпе пĕрле, нимĕçсем йышăнса тăракан высотана атакăланă. Паттăр командир тĕл персе тăшманăн темиçе салтакне пĕтерсе тăкнă та нимĕçсен пулемечĕпе автоматне тытса илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Малая Вишера районĕнчи партизансем нимĕçсен тылĕнче çапăçса çӳренĕ вăхăтра гитлеровецсем çине темиçе хутчен те ăнăçлăн тапăннă. Нумаях та пулмасть партизансем фашистла бандитсен карательнăй отрячĕ çине тапăннă та 13 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ. Засадăна пытанса ларса, партизансем нимĕçсен танкеткине, офицерсем ларса пыракан штаб машинине, радиостанцине пĕтерсе тăкнă. Иртнĕ кунсенче çеç партизансем нимĕçсен тылне красноармеецсен подразделенине ертсе кĕрсе кайнă та, пĕрле çапăçса, нимĕçсен чаçне аркатса тăкнă. Çак операцие ăнăçлă тунине пула пирĕн чаçсем паха пункта йышăнса илнĕ.

Малалли 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

* * *

Нимĕçсен 251-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 459-мĕш полкăн 10-мĕш ротинчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Альфред Ботт çапла каласа панă: «Нимĕç салтакĕсене çăкăр вăхăтра парса тăмаççĕ, кунсерен вĕсене 200—250-шар грамран ытла çăкăр памаççĕ. Ирхине икĕ стакан хура кофе сахăрсăр параççĕ. Кăнтăрлапа пăрça е ясмăк шӳрпи параççĕ. Пирĕн дивизи питĕ пысăк çухатусем турĕ. 10-мĕш ротăра, эпир çапăçăва кĕрсе каяс умĕн, 155 салтак пулнă. Унтан пирĕн ротăна 15 çын хушса пачĕç. Халĕ ротăра 30 салтак тăрса юлчĕ. Вĕсенчен те çурри ытла тăм илнипе суснарланнă».

* * *

Выçăпа аптăранă Итали хĕрарăмĕсем Бра хулинче демонстраци тунă. Хула тăрăх хĕрарăмсем: «Тĕп пулччăр нимĕçсем, вăрçа пĕтерĕр!» тесе кăшкăрса утса тухнă. Демонстраци тăвакансене хăваласа салатма хăтланса пăхнă полицейскисене хĕнесе пĕтернĕ. Полици нумай çынсене арестленĕ.

* * *

Германи çарĕн командованийĕ, Хĕвелтухăç фронтĕнче хăйĕн авиацийĕн çухатăвĕсене пытарса хăварас тесе, темĕн те пĕр хăтланса пăхать. Çав шутпа нимĕçсем фашистсен авиацийĕ ĕмĕрне те туман сĕнтерӳсем çинчен суя пĕлтерӳсем пичетлесе кăлараççĕ. Çапла, январĕн 11-мĕшĕнче гитлеровецсем: январĕн 3-мĕшпе 9-мĕш хушшинче совет авиацийĕ 112 самолет çухатнă, нимĕçсен 16 самолет пĕтнĕ, тесе пĕлтернĕ. Нимĕç пропаганди çак хăйĕн черетлĕ камитне ухмахсене валли шутласа тунă. Чăннипе, январĕн 3-мĕшпе 9-мĕш хушшинче нимĕçсем 169 самолет çухатнă, совет авиацийĕн 39 машина пĕтнĕ.

Ирсĕр сутăнчăксене—вилĕм

Акă вăл, ахаль чухне тĕл пулман йышши документ — тетрадьрен чĕрсе илнĕ чалăш линисемлĕ хут татăкĕ, ун çине химически карандашпа шултра саспаллисемпе, хăюллă та çирĕп почеркпа çак сăмахсене çырса хунă: «Приговор. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн ячĕпе Партизансен отрячĕн сучĕ çапла йышăнать: ĕлĕк трактир хуçи пулса пурăннă, халĕ нимĕçсене сутăннă, нимĕçсем волость старшини туса хунă сутăнчăка, çĕлен-калтана — Дьяконов Николая тата ĕлĕк лаша вăрри пулса тата ытти майсемпе те халăха çаратса пурăннă вăрра, халĕ волость писарĕ пулса тăнă Федор Крешина, пĕр михĕ çăнăхла коммунистсен тата совет активĕн çемьисене кăтартса парса нимĕçсене сутнăскере, персе пăрахмалла. Суд председателĕ П., суд секретарĕ Л.»

Партизансен çак приговора йышăннă сучĕ нумаях пулмасть нимĕçсен тылĕнче, фронт линийĕнчен темиçе çĕр километр шалта, Калинин облаçĕнчи Холм районĕнче пулса иртнĕ. Çак района пырса кĕнĕ нимĕçсем вырăнти халăха вĕçĕ-хĕррисĕр, ним чарăна пĕлми çаратма тытăннă. Хăйсен çаратăвĕ кăштах та пулин закон йĕркипе тунă пек туйăнтăр тесе, вĕсем вырăнти çынсенчен хăйсене юраллă çынсене суйласа илнĕ. Вĕсене волость старшини, ял старости е тата «хозяевод» (килхуçисен пуçлăхĕ) ятлă ĕçлĕ çын пекки туса хунă. Çавсем урлă, вĕсем пулăшнипеле нимĕçсем халăх пурлăхне çаратса юхăнтарма пуçланă. Малтан колхозсен тырпулне турта-турта илнĕ, унтан колхозниксен арчисенчи, комочĕсенчи пурлăхĕсене те çарата-çарата тухнă. Çак «вырăнти власть представителĕсем» пулса тăнă çынсем, пурте тенĕ пекех—чи тискер вăрă, е çуртйĕре çĕмĕрсе кĕрсе çаратакан, хурах пусакан ăстасем. Анчах колхозниксем хăйсен пурлăхне е çĕр чавса пытарнă, е пусă шăтăкне янă, тыррисене кӳлĕсене кайса йăвантарнă: çухалтăр-пĕттĕр те анчах тăшман аллине ан лектĕр, тенĕ вĕсем. Çакна кура, Махотски волоçĕн старшини текен Дьяконов нимĕçсен приказĕпе ялсенчен пур старостăсене те пухтарнă. Вĕсене вăл: сире акă эпир хĕçпăшал паратпăр та, паянтан пуçласа эсир харпăр-хăйĕн е колхозăн пурлăхне пытаракана пурне те судсăр-мĕнсĕрех персе пăрахма пултаратăр. Сире уншăн никам та айăплакан пулас çук, тенĕ.

Старостăсем пухăнса çитсессĕн волость правленине кĕтмен çĕртен никам та палламан икĕ çын пырса кĕнĕ.

— Нимĕç-комендант мана старшинапа писаре вăрттăн сăмах калама хушса ячĕ, тенĕ вĕсенчен пĕри. Старшинапа писаре коридора чĕнсе тухнă. Иккĕмĕш çынни пӳлĕмри кĕтессе, пухăннисене валеçсе пама илсе тухнă хĕçпăшалсем патнерех, пырса ларнă. Пирусне туртса пĕтернĕ те пĕр васкамасăр автомат пăшалсен замокĕсене, винтовкăсен затворĕсене кăларса илсе тухса кайнă. Хăраса шикленсе ӳкнĕ старшинасем, старостăсем ним пĕлмесĕр тăрса юлаççĕ. Ялтан тухсассăн вăл хăйĕн юлташне хуса çитет; юлташĕ алла нимĕçсен автомат-пăшалне тытнă иккен те, старшинапа писаре вăрманалла илсе пырать.

Темиçе сехетрен çак сутăнчăксене партизансен сучĕ умне тăратнă. Кăвайт таврă ларнă çынсем, пысăк сухаллă, çилĕллĕ хаяр пит-куçлăскерсем, çакă тин илсе килнĕ çынсенчен чылай вăхăт хушши ыйтса тĕпченĕ, унтан волоçа кайса килнĕ Л. партизан приговор вуласа панă та вăрманти шăплăхра икĕ хутчен пистолетран пенĕ сасă илтĕннĕ. Хытах янраман ку сасăсем, анчах та вĕсем пĕтĕм округĕпе илтĕннĕ, тепĕр куннех вара, партизансем çавăн пек тавăрасса кĕтмесĕрех, кӳршĕри волоçсенчи старшинасемпе старостăсем тата «хозяеводсем» пурте тарса пĕтнĕ. Çакă вăл — Калинин облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче юлашки вăхăтра партизансем чылай йышлă туса ирттернĕ судсенчен пĕрийĕ çеç. Çавăн пек судсен приговорĕ тăрăх, Нагорски Березовка ялĕн старости туса хунă Николай Никитина, ĕлĕк патша полицейскийĕ пулнăскере, персе пăрахнă, тата ĕлĕк вăрă пулнă, халĕ нимĕçсем Шушунино ялсовечĕн «хозяевочĕ» туса хунă Петр Зайцева персе тăкнă. Фотеевски районра партизансен пульли ĕлĕк паллă вăрă пулнă, халĕ нимĕçсем волость старшини туса хунă Иван Ледника та çитсе тупнă.

Нимĕçсене сутăннă, вĕсен ĕçне тума пулăшакан ирсĕр сутăнчăксене халăх çавтери кураймасть. Çакна пула нимĕç-хуçасем хытах шикленсе ӳкнĕ. Нимĕçсен командованине пулăшса пыракан çавнашкал çынсен пурнăçне тата пурлăхне партизансенчен сыхлама хушса Германи командованийĕ приказ та кăларнă. «Çавăн пек çынсене сиен тунăшăн айăплисене персе пăрахмалла. Айăплисене тупса памасассăн, ун пек ĕç пулса иртнĕ ялсенчен кашни 10 çынтан пĕрне персе пăрахатпăр», тенĕ çав приказра. Халĕ çавăн пек волость старшинисене нимĕç салтакĕсем алла автомат-пăшалсем тытсах хуралласçĕ, — ку та пулăшмасть. Темле хӳтĕлесессĕн те, тем пек çирĕп хӳмепе картласассăн та, халăх тарăхăвне, халăх çиллине пĕтерсе лартаяс çук. Тулса çитсе вăл темле хӳмене те çĕмĕрсе каçса каять.

Çав районрах хресченсем сутăнчăксен мĕнпур килçурчĕсене е вĕсем тытса илнĕ çуртсене çунтарса янă. Октябрьски районри Власовка ялĕнче ĕлĕк бандит пулнă Андрей Зимин колхозниксем хăйсен тыррине ăçта пытарнине нимĕçсене кăтартса панă. Партизансем ăна тытса пĕтерсе тăкнă. Звягино ялĕнче 70 çулти Филипп Токарев нимĕç салтакне, хăйĕн килкартине нимĕç офицерĕ валли ирхи апат хатĕрлеме тесе чăхă тытма пынăскерне, сăмахпа чарма тăнă. Çавăншăн старике, чиркӳ сывăхĕнчи площаде илсе тухса, халăх куçĕ умĕнче персе вĕлернĕ. Вилес умĕн колхозниксене вăл: «ирсĕр нимĕçсене татах та хытăрах çапа-çапа аркатăр, вĕсен хӳрешкисене пурнăç ан парăр, пĕтерĕр вĕсене!» — тесе кăшкăрнă.

Нимĕçсене сутăннă предательсене, этемлĕхĕн ирсĕр каяшĕсене совет халăхĕ пĕтĕм чун-чĕререн тарăхса пур çĕрте те хаяррăн тавăрĕ, пĕтере-пĕтере тăкĕ.

Б. ПОЛЕВОЙ.
(«Правда» хаçатран).

Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем Совет Союзĕнчи мĕнпур çамрăксем патне янă çыру

«Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳри пирĕн боевой юлташсем — каччăсемпе хĕрсем, комсомолецсемпе комсомолкăсем!

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăксене хăватлăн пыра-пыра çапрĕ. Нимĕç захватчикĕсем шăлĕсене шатăртаттарса, каялла, хĕвеланăç еннелле чакса пыраççĕ. Гитлерла тамăкран пирĕн нумай хуласемпе ялсене ирĕке кăларнă.

Хаклă юлташсем! Фронт орудисем кĕмсĕртетнĕ çĕрте кăна мар, фронт пур çĕрте те — пирĕн станок патĕнче, пирĕн цехра, кашни колхозра. Кашни тултарнă норма, кашни пĕр пăт тырă вăл — тăшмана пырса лекекен снаряд. Мĕнпур çамрăксем: çамрăк рабочисем, колхозниксем, студентсем, служащисем, ремесленнăй училищĕсенче, чугунçул училищисенче, ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем, шкул ачисем — пурте пĕр ĕмĕтпе, пĕр хавхаланупа: вăрçă ыйтнă пек ĕçлес тесе, пирĕн ĕç тăшмана аркатса тăкма пулăштăр тесе, пирĕн ĕçе Сталин юлташ мухтатăр тесе, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ пире фронтран «тав тăватпăр» тенине илтме тивĕçлĕ пулас тесе пурăнаççĕ.

Фронтра пирĕн тăвансем, юлташсем, туссем хăйсен юнне, пурнăçне те шеллемесĕр çапăçаççĕ. Тылра эпир вĕсене тивĕçлĕ пулма тăрăшатпăр. Халĕ пирĕнтен кашнин патриотизмне, эпир тăван çĕршыва, совет влаçне, большевиксен партине мĕнтери парăннине вăрçа хутшăнни тата фронта пулăшу пани тăрăх тĕрĕслеççĕ. Урăх виçе пулма та пултараймасть.

Çамрăксен пуçарăвĕ тăрăх вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен — двухсотниксен, трехсотниксен движенийĕ сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Вуншар пин çамрăк хĕрарăмсем производствăна, станок умне тăрса, фронт валли хĕçпăшалпа боеприпассем туса хатĕрлеççĕ.

Воскресниксенче çамрăксем миллионшар тенкĕ ĕçлесе илсе оборона фондне пачĕç. ВЛКСМ ячĕпе тăракан танковăй колоннăна тума мĕнпур çĕршывĕпех укça пухма тытăннă.

Мĕнпур çамрăксем Сталин юлташăн наказне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ: «йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ валли».

Пирĕн юратакан Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле эпир, Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем, хамăрăн ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе, хамăр фронта паракан пулăшăва пысăклатас тĕлĕшпе хамăр çине социализмла обязательство илме йышăнтăмăр.

Комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвĕпе пирĕн завод коллективĕ хăй çине çакăн пек обязательство илчĕ:

Февралĕн 23-мĕш тĕлне фронт валли планран ирттерсе тăватă дивизие пĕтĕмпех хĕçпăшаллантарма çителĕклĕ специальнăй хĕçпăшал комплекчĕ туса кăлармалла;

виçĕ дивизие хĕçпăшаллантарма çителĕклĕ урăх тĕрлĕ хĕçпăшалсем туса кăлармалла;

ытти тĕрлĕ продукци кăларас тĕлĕшпе производство планне планран ирттерсе 10 процент тултармалла;

1941 çулти декабрь уйăхĕнчи чи пысăк нормăсемпе танлаштарсан, электроэнергие 10 процентран кая мар перекетлемелле.

Çак пысăк задание пурнăçа кĕртес тесе, пирĕн заводра ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем кашниех хăйсен производство нормисене 150-шар процентран кая мар тултарса пыма йышăнчĕç.

Февралĕн 23-мĕш тĕлне заводри двухсотниксен хисепĕ икĕ хут ӳсмелле. Январĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 23-мĕшне çитиччен рационализаторла тата изобретательле сĕнӳсем пухмалли уйăхлăх туса ирттеретпĕр. Хамăрăн çар ĕç пĕлĕвĕсене тăтăшах ӳстерсе пырса, февралĕн 23-мĕш тĕлне танксен истребителĕсем пулма 100 боеца, йĕлтĕр спорчĕн 50 инструкторне вĕрентсе хатĕрлетпĕр.

Пирĕн заводри комсомолецсемпе çамрăксен коллективлă обязательствисем çакăн пек ĕнтĕ. Çакăнпа пĕрлех тата цехсенчи коллективсем, бригадăсем, уйрăм çамрăк рабочисем те хăйсем çине социализмла обязательствăсем илчĕç. Тĕслĕхрен, Будков юлташăн комсомолецсемпе çамрăксен бригади фронт заказĕсене пурнăçа кĕртнĕ чухне производство нормине кунсеренех сахалтан та виçшер хут ытларах тултарса пыма обязательство илчĕ. Поляков, Мешков, Зайцев комсомолецсем тата ытти юлташсем те производство нормине 300 процентран кая мар тултарса пыма сăмах пачĕç. Кун пек тĕслĕхсем сахал мар.

Хамăрăн обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, пирĕн заводăн мĕнпур коллективĕ февралĕн 23-мĕшчен сталинла вахтăна тăчĕ.

Пирĕн çĕршыври каччăсемпе хĕрсем! Сире пирĕнтен пример илме чĕнетпĕр; хăвăр çине социализмла обязательствăсем илĕр, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешĕр, социализмла ăмăртăва анлăнрах сарса ярăр. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăра çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илер, хамăр фронта парса тăракан пулăшăва вăйлăлатар, ылханлă тăшмана аркатса тăкассине хăвăртлатар!

Производствăллă кашни коллективăн, кашни фабрикăри, заводри, учрежденири, учебнăй заведенири комсомолецсемпе çамрăксен, кашни комсомолецпа пионерăн, кашни каччăн, кашни хĕрĕн хăй çине социализмла обязательство илмелле. Çак социализмла обязательствăсене пурнăçа кĕртни тата ирттерсе пурнăçа кĕртни Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле эпир панă парне пулса тăтăр. Фронт валли эпир хамăрăн вăхăта та, вăя та шеллеме тивĕçлĕ мар.

Çамрăк патриотсем! Мĕнпур вăя фронта пулăшма!

Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учитель, юратнă Сталин юлташ!

Тăшмана тĕппипех пĕтерсе тăкма — Сталин ячĕпе, малалла!»

Çамрăксен çак çырăвне цехсенчи тата сменăсенчи пухусенче сӳтсе-явса, заводри мĕнпур коллектив пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăннă. (ТАСС).

РАДИОКАНАШЛУ

Январĕн 11-мĕшĕнче Шупашкарти центральнăй студи урлă республикăри районсенче кроса хатĕрленесси мĕнле пынине пăхса тухас шутпа радиоканашлу пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ А. Матвеев, ЧАССР Совнаркомĕн председателĕн заместителĕ К. Евлампьев, ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ А. Рябов, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕсем П. Михайлов, Р. Хасьянов юлташсем, профсоюз Обкомĕсен председателĕсем, добровольнăй спортивнăй обществăсен руководителĕсем пулчĕç.

Радиоканашлăва Рябов юлташ уçса пычĕ. Вăл радиопереклички тĕллевĕпе задачисем çинчен каласа ăнлантарчĕ. Унтан профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тулнă ятпа пулакан йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленесси районра мĕнле пыни çинчен ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн секретарĕ Аверьянова юлташ тухса каларĕ. Вăрмар районĕнче кроса хатĕрленесси шкулти организацисенче аванрах пырать. Шăхальти, Вăрмарти вăтам, Тупахри туллимар вăтам шкулсенче виçшер хутчен тренировкăллă занятисем пулса иртнĕ. Çав вăхăтра Шăхаль вăтам шкулĕнче вĕренекенсем ГТО значокĕн нормисене 8 çын, БГТО нормисене—21 çын панă. Январь уйăхĕнче ытти шкулсенче те пионерсемпе шкул ачисен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсене ирттерме палăртнă. Ачасем йĕлтĕрсене килте хăйсемех тăваççĕ. Арапуçĕнче—8 мăшăр, Шăхальре—12 мăшăр, пĕтĕм районĕпе вара 140 мăшăр йĕлтĕр тунă. Райцентрта йĕлтĕр бази пур. Унта 65 мăшăр йĕлтĕр тăрать.

Кроса спортинвентарь фабрикинчи комсомолецсемпе çамрăксем хастаррăн хатĕрленеççĕ. Çавăн пекех колхозсенчи комсомол организацисенче те кроса хатĕрленес ĕç вăйланса пырать. Комсомолăн Вознесенскри организацийĕ ертсе пынипе çамрăксем 3 километрлă поход тунă. Унта 19 çамрăк хутшăннă. Çапах та колхозсенчи комсомол организацийĕсенче хатĕрленӳ ĕçĕ япăхрах тăнине палăртмалла.

Кросра пулмалли юлташсене 161 çынна медицина енĕпе тĕрĕсленĕ, халĕ подразделенисем йĕркелеççĕ.

Малалла ВКП(б) Улатăр райкомĕн çарĕç пайĕн заведующийĕ Ананин юлташ тухса калать.

Улатăрта кроса хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ятарласа план тунă. Районри оргкомитет çав план тăрăх ĕçлет. Судьясен коллегисене уйăрса çирĕплетнĕ. Районри йĕлтĕрсене шута илсе тухнă. Организацисенче 758 мăшăр, харпăрхăйĕн килĕнче 200 мăшăр йĕлтĕр пур. Тата 500 мăшăр йĕлтĕр илме, 300 мăшăр килте тума палăртнă.

Кроса хутшăнасси çинчен организацисем заявкăсем параççĕ. Халĕ пурĕ 1.016 çын заявка панă. Кроса 800 команда туса, 4 пин çынтан кая мар хутшăнтарма шутлатпăр. Заявкăсем парасси вăйланса пырать.

Больницăсем çумĕнче ятарласа медицина комиссисем организациленĕ. Вĕсем кросра пулмалли юлташсене тĕрĕслеççĕ. Районра организацисем тренировкăсем туса ирттереççĕ.

Кроса хатĕрленесси всевобучăн боецĕсем хушшинче аван пырать. Вĕсене командăсене уйăрса йĕркеленĕ. Йĕлтĕрсем çителĕклĕ. Медицина енĕпе тĕрĕслӳ туса ирттернĕ.

ВКП(б) Советски райкомĕн секретарĕ Никитин юлташ сăмах тухса калать.

Кроса хатĕрленсе ирттерес ыйтăва ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче, учительсен районри канашлăвĕнче сӳтсе-явнă. Ăмăрту 6 кустра пулса иртет. Вĕсем валли судьясен коллегине тупса çирĕплетнĕ. Районĕпе 342 çынран 34 команда тунă. Унсăр пуçне всевобучри боецсем хутшăнаççĕ. Кросра пурĕ 950 çын пулать. Вĕсенчен 138 çын медицина енĕпе тĕрĕслӳ витĕр тухнă. Çамрăксем хăйсем 31 мăшăр йĕлтĕр тунă. Çапах районра йĕлтĕр çителĕксĕр-ха. Шĕмшешри, Советскри вăтам шкулсенчи, Александровкăри колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕсем тренировкăсем туса ирттернĕ.

ВЛКСМ Октябрьски райкомĕн çарпа физкультура енĕпе ĕçлекен секретарĕ Федоров юлташ çапла каласа парать:

Районри 1452 çын кроса хатĕрленсе, тренировкăсене хутшăнаççĕ. Профсоюз членĕсем, комсомолецсем походсем туса ирттереççĕ. Çавăн пекех всевобуч подразделенийĕсенчи боецсем те 30 километрлă похода кайса килнĕ. Тренировкăсем, походсем ирттернĕ вăхăтра районĕпе 105 çын ГТО значокĕн нормисене панă. Районри допризывниксем те тренировкăсенче тăтăшах пулаççĕ. Вĕсем противогаз тăхăнса 10 километрлă военизированнăй поход туса ирттернĕ. Районра 332 мăшăр йĕлтĕр пур. Вĕсенчен 77 мăшăрне килте тунă. Профсоюз организацийĕсем те 20 çухрăмлă поход тунă. Унта 170 çын хутшăннă.

Кроса хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен малалла Етĕрне районĕнчи учительсен райкомĕн председателĕ Степанова, ВЛКСМ Çĕмĕрле райкомĕн çарпа физкультура енĕпе ĕçлекен секретарĕ Егоров, ВЛКСМ Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ Васильев юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен, кроса хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе тумалли конкретнăй ĕçсене кăтартса, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ А. Матвеев юлташсем сăмах каларĕç.

ЮНЛĂ ФАШИЗМА ÇĔНТЕРМЕ ХĔРЛĔ ÇАРА ЫТЛАРАХ ПУЛĂШАР

Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнче вĕренекенсем тата преподавательсемпе профессорсем январĕн 9-мĕшĕнче В. М. Молотов юлташăн нотине вуласа тухса сӳтсе-яврĕç.

Сынçăнсем, халăхсен историллĕ памятникĕсене çĕмĕрсе ишĕлтерекенсем, этемлĕхĕн культурипе цивилизацине иртнĕ тискер ĕмĕрсене туртакан нимĕç фашисчĕсен юнлă йыткĕтĕвĕсем хăйсем вăхăтлăха туртса илнĕ совет территорийĕ çинче тискер ĕçсем тăваççĕ. Нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсем çинчен совет халăхĕ нихăçан та манмĕ.

Студентсем, преподавательсем, профессорсем В. М. Молотов юлташăн нотине итленĕ хыççăн Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли тата ытларах ăшă тумтирсем пухма, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума татах та укçа-тенкĕ пама пулчĕç.

Г. БУШУЕВ.

Халăх фронтшăн тăрăшать

Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем пире кашнинех савăнтараççĕ тата хаваслантараççĕ. Нимĕç захватчикĕсен хĕçпăшаллă вăйĕсем урса кайса тапăнса пынине чарса лартса, пирĕн Хĕрлĕ Çар фронтăн чылай участокĕсенче хăй наступлени тума пуçларĕ, вăл ĕнтĕ нимĕçсен тискер кĕтĕвĕсене вăйлăн çĕмĕрсе пырать. Совет халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн пыракан аслă вăрçи çĕнĕ тапхăра кĕчĕ.

Мускав патĕнчи тата фронтăн ытти участокĕсенчи ăнăçсăрлăхсене Гитлерпа унăн банди хĕл çитнипе тата хаяр сивĕсем пулнипе ăнлантарса пама хăтланаççĕ. Хĕлпе сивĕ кунсем, сăмах та çук, нимĕç çарне чылаях вăйлăн пырса тиврĕç. Нимĕç вăрă-хурахĕсем вырăс хĕлĕн хаярлăхне тӳссе курчĕç, анчах Мускав патĕнче тата фронтăн ытти участокĕсенче нимĕçсем поражени тӳснин тĕп сăлтавĕ сивĕсенче мар, вăл сăлтав — Германин вăйĕсем майĕпенех пĕтсе пынинче тата пирĕн вăйсем ӳссе, тĕрекленсе пынинче пулать. Ку çеç те мар, отечественнăй вăрçăн вут-хĕмĕнче Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем пиçĕхсе пыраççĕ тата пиçĕхсе çитрĕç те, вĕсем нимĕç çарĕшĕн аçа-çиçĕм пулса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар йывăр испытанисем витĕр тухрĕ, тăшмана вăл вăйлăн суранлатрĕ, пысăк çухатусем тӳстерчĕ. Анчах лăпланса ларма ир-ха. Тăшман вăйлă, килес кунсенче татах та вăйлă та хаяр çапăçусем нумай пулĕç. ССР Союзĕн кашни гражданинĕн, вăл кирек ăçта пурăнать пулин те, çакăн çинчен яланах асра тытмалла.

Хамăр çĕнтерессе эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр. Çак шанăç пире вăй парать, çавăнпа пĕрлех вăл пире хăвăртрах çĕнтерӳ тумашкăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хушать. Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче лартнă задачăсене пĕтĕмĕшпех тата хăвăрт пурнăçа кĕртес тесе, пирĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, фронт валли хĕçпăшалсем, боеприпассем, чĕртавар тата апат-çимĕç ытларах та ытларах парса тăмалла. Тылра хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр ĕçлени тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартать.

Совет халăхĕ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса пырать. Хăйсен тăван çарне тĕреклетес тесе, пирĕн çĕршыври патриотсем хăйсем тума пултарнине пурне те тăваççĕ. Мускав патĕнче нимĕçсене поражени кӳни, Хĕрлĕ Çар фронтăн ытти участокĕсенче те чаплă çĕнтерӳсем туни пире кашнинех ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, тăшмана хăвăртрах та вăйлăнрах çĕмĕрсе тăкас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Çак çĕнтерĕве тăвас тесе, вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçĕпе пурнăçне фронта пулăшассине пăхăнтараççĕ. Пирĕн республикăри предприятисем, кооперацисемпе промысла артелĕсем 1941 çулта производство планне тултарас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлесе пычĕç, вĕсенчен нумайăшĕсем, çĕнĕ продукци туса кăларма вĕренсе, хăйсем фронта мĕн пама пултарнине туса пачĕç. Эпир фронта пулăшасси кунран-кунах ӳссе тата сарăлса пырать.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем оборона фондне, 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă даннăйсем тăрăх, 5 миллион тенке яхăн укçа, 5 миллион та 500 пин тенкĕлĕх облигацисем панă. Республикăри колхозсем оборона фондне 346 тонна тĕштырă, 432 центнер аш-какай, 75 тонна сĕт, пахча-çимĕçсемпе ытти продуктсем нумай панă. Кунсăр пуçне пирĕн республикăри колхозниксем СССР оборонин фондне кашни уйăхрах хăйсен ĕçкунĕсене парса тăраççĕ, çав ĕçкунĕсем çине тивекен пиншер центнер тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе ытти продуктсем оборона фондне каяççĕ.

Республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тата кĕпе-йĕмсем пухса парас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлерĕç. Республикăра пĕтĕмпе 60.000 тир, 33.000 килограмм çăм пухнă, вĕсенчен 6.000 кĕрĕк пиншак тата 15.000 мăшăр çăматă хатĕрлесе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ярса панă. Ытти ăшă япаласене те нумай пухса фронта янă. Çак фактсем ĕнтĕ Чăваш республикинчи ĕççыннисен патриотизмла туйăмĕ пысăк пулнине кăтартса параççĕ.

Пирĕн фронта пулăшассине кашни кунах вăйлатса тата ӳстерсе пымалла. Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли мĕн кирлине пурне те туса памалла. Вĕсем кĕрешӳри йывăр самантсенче вĕсемшĕн тăван çĕршыв тата пĕтĕм халăх тăрăшнине туйса тăччăр. Халăх вăйĕпе халăхăн пулăшăвĕ вĕсене паттăррăн та хăюллăн кĕрешме хавхалантарса пыччăр.

Партипе советăн вырăнсенчи оргăнĕсен, политикăллă ĕçе сарса ярса, фронта пулăшассине татах та вăйлатма кирли çинчен халăха ăнлантарса памалла. ВКП(б) райкомĕсен сăмах вĕççĕн тата пичет урлă тăвакан пропагандăна вăйлатмалла. Пирĕн агитацин чăн сăмахĕсем кашни рабочине колхозник патне çитчĕр. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи событисем çинчен халăха пĕлтерсе тăрассине татăклăнах лайăхлатмалла. Çак тĕлĕшпе ВКП(б) Шупашкар тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем лайăх ĕçлենине палăртас пулать. Вĕсем, ăнлантару ĕçне лайăх туса пырса, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем пухас ĕçе чылай вăйлатрĕç. Çак райкомсем фронтри событисем çинчен пур колхозсенче те политикăллă каласусем туса пырассине организациленĕ. Колхозсене пынă агитаторсемпе докладчиксем колхозниксене фронтри событисем çинчен, Хĕрлĕ Çар чылай участоксенче тунă çĕнтерӳсем çинчен каласа панă, ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен председателĕсем вара колхозниксене хăйсен ĕçĕ çинчен отчет туса панă. Çакăн хыççăн Хĕрлĕ Чутай тата Шупашкар районĕсенчи пур колхозсенче те ăшă тумтирсем тата кĕпе-йĕмсем пухас ĕç çĕнĕрен вăйланса кайнă. Çапла, сăмахран, Шупашкар районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем кăçалхи январĕн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен доклад итленĕ те çавăнтах ăшă тумтирсем пухас ĕçе организациленĕ. Çав кун колхозра пĕтĕмпе 47 тир, 12 мăшăр алшиш, 17 мăшăр чăлха, 5 мăшăр тăла, 4 мăшăр çăматă тата 1.500 тенкĕ укçан пухнă. Колхоз председателĕ И. Александров юлташ 2 тир тата пĕр мăшăр алшиш панă, колхозник В. Столяров ваттăран çĕлесе тунă брюки тата пĕр тир парать, колхоз кладовщикĕ С. Васильев 2 тир парать. Буденный ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи событисем çинчен доклад итленĕ хыççăн 8 тир, 8 мăшăр алшиш, 5 мăшăр чăлха тата 1000 тенкĕ укçан панă. Колхоз председателĕ Г. Иванов кĕрĕк пиншак панă, колхозник К. Леонтьев пĕр мăшăр çăматă тата пĕр тир панă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Великан» колхоз колхозникĕсем Хĕрлĕ Çарăн Мускав патĕнчи тата фронтăн ытти участокĕсенчи çĕнтерĕвĕсем çинчен доклад итленĕ хыççăн çавăнтах 28 тир, 5 мăшăр алшиш, 25 килограмм çăм пухнă. «День урожая» колхозра 31 тир, 2 килограмм çăм тата 7 мăшăр алшиш пухнă. Çав колхозри колхозниксем Н. Агашкин тата Пудов юлташсем виçшер тир тата çуршар килограмм çăм панă, колхозница Ердукова 2 тир, пĕр çĕлĕк панă.

Çак лайăх примерсене сарса пырса, ВКП(б) райкомĕсен хăйсен районĕсенчи колхозсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тата кĕпе-йĕмсем пухассине татах та вăйлатса ямалла. ВКП(б) райкомĕсен çак ĕçе хăйсен ертсе пымалла, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухасси государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăнине вĕсен яланах асра тытмалла. Анчах ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлекен райкомсем те пур-ха. Первомайски, Шăмăршă, Советски, Кувакино, Йĕпреç, Элĕк тата Вăрнар райкомĕсем çак паха ĕç çине сахал çаврăнса пăхаççĕ. Çак пысăк ĕçе иккĕмĕш вырăнти рабочниксене шанса параççĕ, вăл ĕç кашни кунах ертсе пымаççĕ, çавна пула вара вĕсен результатсем те начар.

Партин вырăнти оргăнĕсен ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен ĕçне лайăхлатмалла, вĕсене пулăшса тата ертсе пымалла. Пирĕн республикăри рабочисем, колхозниксем, служащисемпе интеллигентсем пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе пурте хутшăнтăр,—çак задачăна пирĕн килес сывă вăхăтсенчех пурнăçа кĕртмелле. Чылай районсенче ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем хăйсен ĕçĕ çинчен отчетсем туса пама тытăнчĕç. ВКП(б) райкомĕсен çак пуçарăва пур енчен те пулăшса пырас пулать, предприятисемпе организацисенче тата колхозсенче пуринче те комиссисем отчет тăвассине организацилемелле, çапла вара ăшă-тумтирсем пухас ĕçе татах та вăйлатмалла. Эпир фронта пулăшассине пур майпа та вăйлатса пырас пулать, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйсăрлатмалла мар, пачах урăхла, ăна пур енчен те тата пур çĕрте те çĕнĕ вăйпа сарса ярас пулать. Партипе советăн вырăнти оргăнĕсен задачи — çак питех те паха ĕçе кашни гражданинах активлăн явăçтарасси пулать.

А. МАТВЕЕВ.
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПАРТИ РЕТНЕ ÇĔНĔ ÇЫНСЕМ ИЛЕС ЕНĔПЕ КУЛЛЕН ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Германи оккупанчĕсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă пынă кунсенче малта пыракан чи лайăх çынсем, халăхăн чи лайăх ывăлĕсем Ленин—Сталин партийĕн ретне кĕреççĕ. Вĕсем çак хăрушă кунсенче хăйсен пурнăçĕсене большевиксен партин пурнăçĕпе çыхăнтарса, тăшмана çĕмĕрсе тăкма фронта татах та ытларах пулăшас тесе ыткăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа çĕнĕрен сахал мар çынсем парти ретне кĕчĕç. Вĕсем ĕçре тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ, хамăр тăван çĕршывшăн, фронта пулăшассишĕн мĕнпур вăйĕсене хураççĕ. Çак кунсенче Красноармейски парти организацийĕ парти членĕсен ретне П. Петров, И. Семенов юлташсене илчĕ. П. Петров юлташ 8 çул ытла ĕнтĕ Мăн Шетмĕ ялсоветĕнчи «Красный Порденер» колхоз счетоводчĕ пулса ĕçлет. Петров юлташ колхозри учетпа отчет ĕçне тивĕçлĕ вырăна лартрĕ. Вăл колхозниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Колхозниксем хушшинче час-часах политикăллă калаçусем ирттерет, хаçатсем çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисене вуласа парать. Колхозра тухса тăракан стена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлет.

И. Семенов юлташ икĕ çул ĕнтĕ Медикасси ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ пулса ĕçлет. Семенов юлташ ĕçлеме пуçăннинчен колхоз питех те кайра пынă. Халĕ колхоз сисĕнмеллех малалла тухса пычĕ.

Парти ретне илес ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Партин хăшпĕр пуçламĕш организацийĕсем масса хушшинчи политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ, партире тăман актив хушшинче начар ĕçлеççĕ. Çапла, МТС çумĕнчи парторганизаци районра чи йышлă организаци шутланать. Анчах вăл организацире юлашки ик-виçĕ уйăх хушшинче пĕр пуху та пулман. Парторганизаци МТС-ра политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Унта парти ретне çĕнĕ çынсене илес енĕпе питĕ начар ĕçлеççĕ.

МТС ĕçĕсем кая юлса пыни те çавнах кăтартса парать. Халĕ машинăсем, тракторсем юсас ĕç хĕрсе пымалла. Анчах çак ответлă ĕçе халĕ те организацилемен. 1941 çулти IV кварталта 8 трактора капитальнăй ремонт, 14 трактора кулленхи ремонт тумалла пулнă, анчах вĕсем пĕр трактор та юсаман-ха. Машинăсем юсакан мастерскойра ĕçлекенсем валли условисем туса паман пирки, кунĕ-кунĕпе вăхăта ахалех ирттереççĕ. Рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту пуçарса яман.

МТС çумĕнчи парторганизацине парти райкомĕ енчен пулăшу кирлĕ. Пуçламĕш парторганизацисен хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетсе пымалла. Чи лайăх çынсене парти ретне суйласа илес енĕпе куллен çине тăрса ĕçлемелле.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Агитаторсен ĕçĕ çитĕнÿсем тума пулăшать

ИЕПРЕÇ. Политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилени вăрçă кунĕсенче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине Хурамал ялĕнчи партипе совет активĕ тĕрĕс ăнланать. Çавăнпа та кунта ăнлантару ĕçне кулленех лайăхлатса пыраççĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе партин пуçламĕш организацийĕ çумĕнчи агитколлектив туса пырать. Агитколлективăн ертсе пыма парти членне, М. Патова юлташа уйăрнă. Патова юлташ обществăллă ĕçе чĕререн парăннă учительница. Çак ялта вăл сакăр çул хушши ĕçлет. Вăл вĕрентекен класс малта пыракан, примерлă классенчен пĕри шутланать. Патова юлташ, ачасене вĕрентес ĕçе тĕплĕн туса пынипе пĕрлех, обществăллă ĕçре те ырми-канми ĕçлет.

Çавăн пекех ытти учительсем те, уйрăмăнах А. Ильинапа П. Прокопьев юлташсем, обществăллă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем, политикăллă ăнлантару ĕçне тимлĕн туса пырса, агитколлективăн ятне çĕклеççĕ.

Çулла, хĕрÿллĕ ĕç вăхăтĕнче, Патова юлташ тăрăшнипе агитаторсем халăха тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланмалли майсене вĕрентсе пычĕç. ПВХО ĕçне пурĕ 470 çынна вĕрентсе кăларнă.

Сталин юлташ иртнĕ çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ доклада агитаторсем массăна тĕплĕн ăнлантарса панă. Колхозниксен пысăк пухăвĕнче тата бригадăсенче ку тĕлĕшпе тĕплĕ калаçусем туса ирттернĕ. Çапла майпа массăна фронта пулăшас ĕçе ăнлан явăçтарнă. Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене колхозниксем 4500 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Агитколлектив ялсоветĕпе колхоз правленине кашни ĕçрех пысăккăн пулăшса пырать. Политикăллă-массăллă ĕçе ертсе пынипе пĕрлех, вăл колхоз производствипе те интересленет. Нумаях пулмасть, агитколлектив пуçарнипе, колхоз хуçалăхне тата бригадăсен ĕçне тĕрĕслеме уйрăм комиссисем тунă. Çак комиссисем колхоза тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă. Малта пыракан бригадăсен паха опычĕсене илсе кăтартнă, учет тĕлĕшĕпе начар ĕçлекен бригадăсене палăртса хăварнă. Çакăн хыççăн, тĕрĕслÿ результачĕсене активра сÿтсе явса, колхоза ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшнă. Колхозăн малта пыракан бригадисем—6-мĕшпе 7-мĕш бригадăсем пулса тăраççĕ. Çак бригадăсене Е. Красновăпа Казакова юлташсем ертсе пыраççĕ. Хĕрарăм-бригадирсене Патова юлташ кулленех пулăшса тăрать.

Фашистла захватчиксене Мускав патĕнче çапса çĕмĕрни çинчен пĕлтерекен хаçата илсенех ялта митинг пулса иртрĕ. Агитаторсем çак савăнăçлă пĕлтерĕве бригадăри пухусенче сÿтсе явнă.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерĕвĕсем çинчен каласа панă хыççăн колхозниксем хăйсен производствăри пултарулăхне татах та ытларах çĕклерĕç.

В. АНДРЕЕВ.

Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсене кирлĕ самолетсене конструкциленĕ хатĕрлес ĕçре пит те пысăк çитĕнÿсем тунăшăн СССР Верховнăй Совет Президиумĕ палăл конструкторсене орденсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Ÿкерчĕк çинче: наградăланă хĕрарăм—конструкторсен ушкăнĕ. Сулахайран сылтăмалла: В. Н. Фролова, Т. В. Рузакова, А. В. Советова, З. В. Вышеславцева тата А. Г. Жадаева.

Ф. Кислов фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

КОЛХОЗСЕНЕ ÇУРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНМЕ ПУЛĂШАТПĂР

Шемшерти вăтам шкула вĕренекенсемпе учительсене Сталин юлташ фронта пулăшма тĕнче хальхине активлăн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕрене фронтĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартнипе пĕрлех вĕсем колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсене вăйлăн пулăшрĕç. Вĕренекенсемпе учительсем колхозсене 9 гектар тырă вырса, 13 гектар çĕрулми кăларса пачĕç. Çак ĕçсĕн тухакан тырра вĕсем йĕркелĕ тавраса фондне хывăç. 10-мĕш класра вĕренекен М. Константинов çуллахи каникулта колхозра ĕçлесе 140 ĕçкунĕ, VIII-мĕш класра вĕренекен Н. Сергеев 100 ĕçкунĕ, VII-мĕш класра вĕренекен М. Пикторинская 66 ĕçкунĕ тунă.

— Эпир шкулсене ялхуçалăх ĕçне вĕрентме тытăнмалли çинчен партипе правительство кăларнă постановленине хĕрÿллĕн ырлатпăр. Кĕске вăхăтрах ялхуçалăх ĕçне, çĕр ĕçне те тухма, ялхуçалăх усеттиракенсен пахса ÿстерме те вĕсене пухса хĕме, ялхуçалăх машинисене ĕçлеме вĕрене çитме пултарĕç,—терĕ Шемшер вăтам шкулĕнчи вĕренекенсем учительсем.

Халĕ пирĕн шкул вĕренекенсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. [illegible] хатĕрлесес ĕç колхозсене вăрлăх фонне вăрлăх пахи тата çăл фондсене лайăх пахса усранине пулăшу килет.

Шемшерти вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем «Серп и Молот», «Заря», «Çăл-ту», «Красная звезда», «1-ое Мая» колхозсене вăрлăх фончĕсене сортласа пама тата колхозсене ĕçре активлăн пулăшма пыма хăйсем çине обязательствăсем илчĕç.

— Хамăр çине илнĕ çак обязательствăсене пурнăçа кĕртме эпир пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр, мĕншĕн тесен лайăх вăрлăх хатĕрлесе хуни вăл кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илессин пĕрремĕш ен пулса тăрать,—терĕç вĕренекенсем учительсемпе. Хăйсен обязательствисене вĕсем пурнăçлама тытăнчĕç. Вĕсен примерĕпе республикăри ытти шкулсен те колхозсене çуракине хатĕрленме лайăххăн пулăшма тивĕç. Ялхуçалăх ĕçне теори енчен те, практика енчен те вĕренме пирĕн вĕренекенсем, учительсем лайăх вĕрене пултараççĕ.

М. ПЕТРОВ.

Шупашкар районĕнчи Шемшер вăтам шкулĕн директорĕ.

Шкул коллективĕ вĕренÿ ĕçне лайăхлатрĕ

ВĂРНАР. Мăн Турханти пуçламĕш шкула вĕренекенсемпе учительсем вĕренÿ ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе хăйсем çине çирĕп обязательствăсем илнĕччĕ. Учительсем—вĕренÿ ĕçне лайăхлатма, урок вăхăтĕнче лайăх меслетсемпе усă курма, ачасене воспитани пама тата дисциплинăна çирĕплетессишĕн кĕрешме пулначĕç. Вĕренекенсем—шкула пĕр кун сиктермесĕр çÿреме, хатĕрлĕ урокки лайăххăн хатĕрленме, дисциплинăна пăхăнма, вĕренÿ пахалăхне кунран-кун ÿстерме пулна.

[illegible] класс, учительпе учитель тата кашни вĕренекенпе вĕренекен пĕр-пĕринпе ăмăртса пычĕç. Обязательствăсене учительсем те, вĕренекенсем те пикенсех пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Çакна пула шкулти пурнăç палăрмаллах лайăхланса çитни курăнать.

— Пирĕн ăмăрту — вĕренÿ пахалăхне те, дисциплинăна та чылай хăпартрĕ,— тет шкул заведующийĕ Е. Егорова юлташ.

Шкулта тухса тăракан «Отличник» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Хаçат кая юлакан ачасене вĕренÿ ĕçне лайăхлатма пулăшать.

Шкулти вĕренÿ ĕçне лайăхлатнипе пĕрлех, Мăн Турхан учительсемпе вĕренекенсем Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Ачасем государствăна тимĕр-тăмăр пухса панă, колхоза уйхир ĕçĕсенче пулăшнă, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтир пухас енĕпе ĕçленĕ тата ыт. те. Учительсем ялта агитаторсем пулса ĕçлеççĕ.

С. ПУДАКОВ.

Вăрман хатĕрлевĕнче

ЕТĔРНЕ. Кудаш ялсоветне кĕрекен «Красная звезда», «Мичурин», «Пионер» колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Вĕсем вăрманта пĕтĕм вăйпа ĕçлесе, хăйсене панă задание вăхăтра пурнăçлама тăрăшаççĕ. Кадрта тăракан рабочисем колхозниксене ĕçре куллен пулăшса пыраççĕ. Уйрăмах мастер Данилов çĕнĕрен пынă рабочисемпе нумай ĕçлет. Вăл хăйĕн участокĕнчи ĕçе лайăх организациленĕ. Унăн участокĕнче ĕç нормине ирттерсе тултаракан рабочисем сахал мар. Иваново колхозĕнчен пынă Микинин юлташ кулленех ĕç нормине 200 процентран кая мар тултарса ĕçлет. Хăйĕн пархатарлă ĕçĕшĕн вăл 1.300 тенкĕ преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ишалеев юлташ та васкавлă заказа пурнăçланă. çĕрте вăхăта шутламасăр, пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕ. Хромов, Глазков юлташсем кулленхи нормăна 150 процент таран тултарса пыраççĕ.

Рабочисене çавнашкал ăнăçлăхпа ĕçлеме кунта лайăх условисем туса панă. Бараксем çителĕклĕ, рабочисене вĕри апат çитереççĕ, кадровăй рабочисене пурне те ĕçлемелли тумтирсем панă. Рабочисене ĕçрен пушансан вулама хаçатсем çителĕклĕ çырăнса илнĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар туса пыракан çитĕнÿсем çинчен вуласа татах та лайăхрах ĕçлеме хавхаланаççĕ. Анчах районри ялсоветсем те вăрман хатĕрлев ĕçне пурте мар-ха хутшăнаççĕ. Засурье ялсовечĕ ку тарана çитсе те вăрмана пĕр çын та яман. Çавăн пекех II-Чебаково ялсоветĕнчи «Комбайн» колхоз та вăрман хатĕрлевне хутшăнма шухăшламасть-ха.

В. СЕМЕНОВ.

Кăпчанкă—паха чĕртавар

Чăваш республикинчи вăрман хуçалăхĕсем кăпчанкă хатĕрлес плана ăнăçлăн пурнăçларĕç. Резина промышленноçĕнчи руководительсем хакланă тăрăх, Чăваш республикинчи кăпчанкă йывăççĕ лайăх пахалăхлă чĕртавар шутланать. Иртнĕ çулсенче кăпчанкă йывăççне хатĕрлес ĕçе йĕркеллĕ туса пыман пирки кирлĕ мар çÿп-çап нумай кайнă. Кăçал кăпчанкă йывăççне пĕр çÿп-çап ямасăр тасатса хатĕрлесе панă. Уйрăмăнах Шупашкарти опытлă вăрман хуçалăхĕ кăпчанкă йывăççне лайăх хатĕрлесе пачĕ. Вăл ытти организацисенчен малтан кăпчанкă хатĕрлемелли плана ытлашшипех тултарнă.

В. М.

Выльăхсем валли ăшă витесем тăвар

СОВЕТСКОЕ. Пирĕн районри колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн шучĕ те, продуктивноçĕ те 1941 çулта чылай ÿсрĕ. Выльăхсен продуктивноçне хăпартас тĕлĕшпе фермăсенче ĕçлекен колхозниксем пысăк çитĕнÿсем турĕç.

Халĕ, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пынă вăхăтра, пирĕн колхозсен Хĕрлĕ Çара ĕçлĕн пулăшас шутпа апат-çимĕç продукчĕсем, чĕртаварсем ытларах хатĕрлемелле. Çак ĕçре чи малтан пирĕн колхозсен фермисенчи выльăх-чĕрлĕхе ытларах ĕрчетес, унăн продуктивноçне татах та вăйлăн ÿстермелле.

Выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлăн ĕрчетес, выльăхсен продуктивноçне ÿстерес ĕçре вĕсене хĕллехи сивĕ кунсенче ăшă витесенче усрани пысăк вырăн йышăнать. Çакна шута илсе, пирĕн районри нумай колхозсем ăшă витесем туса лартрĕç. Шарбаш ялĕнчи «Искра» колхоз 250 пуç вырнаçмалăх чăх-чĕп вити, 100 пуç вырнаçмалăх ĕне вити туса лартрĕ. Чемейри «Сеятель», Асламасри «Коминтерн» колхозсем те выльăхсене усрама çĕнĕ витесем турĕç. Витесенче выльăх-чĕрлĕхе апат норма тăрăх, тăккаламасăр çитерме май пур.

Çапла, «Сеятель» колхозра выльăх апатне тăккаламасăр, норма тăрăх çитерсе тăраççĕ. Кашни эрнерех апата акт тăрăх уйăрса илнипе çитереççĕ. Çапла туни колхоза выльăх апатне перекетлеме, выльăхсене кĕркунне те, хĕлле те тата çуркунне те кирлĕ таран пĕр пек тăрантарса усрама май парать.

Анчах выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес тата унăн продуктивноçне ÿстерес ĕçе пур колхозсем те тивĕçлипе туса пымаççĕ-ха. Советскинчи «Ударник» колхозра выльăх картисене пĕре те юсаман. Вĕсенче сиплĕ юр витĕрех вĕçтерсе тăрать. Выльăх апачĕсене ним йĕркине пĕлмесĕр тăккалаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вĕсен продуктивноçне ÿстерес енĕпе фермăсенче ĕçлекен работниксене ĕçшĕн хупса тÿлемелли йĕрке ĕçре пысăк çитĕнÿ тума май пачĕ. Нумай колхозсенче тин çуралакан çамрăк выльăхсене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне татах та вăйлăнрах ÿстерессишĕн, колхозсен обществăллă фермисенчи выльăхсен йышне ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Е. ИВАНОВ.

Хĕрачасем çĕнĕ специальноçсем туянаççĕ

Улатăр станцинчи депори комсомолкăсем производствăри тĕрлĕ специальноçсене вĕренеççĕ. Квалификациллĕ слесарь, токарь е машинист пуласси—акă çамрăк патриоткăсен ĕмĕчĕсем.

Паспорт сĕтелĕн начальникĕ Ахантьева, ĕçрен пушансан, слесарь пулма вĕренет.

Топливо филиалĕн начальникĕ комсомолка Казяева икĕ специальность — машинистăн помощникĕ тата слесарь пулма вĕренсе çитет.

Табельщица пулса ĕçлекен Прокуророва юлташ строгальщик, Тихонова комсомолка машинист пулма хатĕрленеççĕ.

Слесарь Шаля юлташ токарь ĕçне юратса вĕренет.

Тĕрлĕ специальноçсене, производствăра ĕçлекен çамрăк хĕрсемсĕр пуçне, чугунçул çинчи рабочисен килхуçи хĕрарăмĕсем те вĕренеççĕ.

Депо начальникĕн арăмĕ Подмаркова юлташ слесарь пулма вĕренет.

Çĕнĕ профессисене туянас тĕлĕшпе хĕрарăмсене депо начальникĕ Подмарков юлташ пулăшать.

Этем тивĕçлĕхне таптакансен „теорийĕ“

Этем сăнне çухатса тискер кайăк вичине çити анса ларнă фашистла çынçиенсем пĕтĕм тĕнчене çапла ĕнентерме хăтланаççĕ: пĕтĕм этемлĕх икĕ тĕрлĕ раса çине—çÿлти тата аялти расăсем çине пайланса тăрать, теççĕ. Çÿлти расăри çынсем—господăсем, аялти расăрисем вара—чурасем пулаççĕ. Çураласса та вĕсем çав çÿлти расăри господăсене пăхăнса пурăнма кăна çураççĕ имĕш.

Халăхсем хушшинче пĕртанлăха фашизм йышăнмасть. «Ытти халăхсем нимĕç халăхĕпе пĕртан правăллă пуласси эпĕ нихăçан та йышăнмастăп. Пирĕн миссии ытти халăхсене пăхăнтарасси пулса тăрать. Германи халăхĕн тытчене господăсен çĕнĕ класне памалла», тет Гитлер.

«Халăхсем хушшинче пĕртанлăх çук,—тесе çырать фашистсен тепĕр «историкĕ»,—вĕсем пусма евĕрлĕ йĕркеленсе тăраççĕ. Чи çÿлти пусăмра нимĕç халăхĕ тăрать», тет вăл.

Германири фашистсен раса теорийĕ тăрăх, çапла вара, нимĕç мар ытти халăхсем пурте аялти расăри халăхсем пулса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсен нимĕç господисен, нимĕç баронĕсемпе князĕсен чурисем пулса пурăнмалла.

Раса теорийĕ текен çак ухмахла «теори», наукăна хирĕçле «теори» нимĕç фашисчĕсен идеологиллĕ никĕсĕ пулса тăрать. Вăл—нимĕç фашисчĕсем тăвакан тĕрлĕ тискер ĕçсен никĕсĕ. Шăпах ĕнтĕ çак «теорипе» витсе тăраççĕ нимĕç фашисчĕсем хăйсен мĕнпур ирсĕр ĕçĕсене.

Çак «теори» нимĕç фашисчĕсене хăйсен империалистла политикине тÿрре кăларма, хăйсем тăвакан тискер, халăхсем этемлĕх курман-илтмен ирсĕр ĕçсене витсе тăма, нимĕç мар халăхсене туралантарас тата вĕсене пĕтерес тĕллеве пурнăça кĕртсе пыма кирлĕ пулнă.

Гитлерпа унăн шайки, хăйсене çÿлти расăра тăракан çынсен шутне кĕртсе хурса, хăйсем умне ытти халăхсене пĕтерсе пырас тĕллеве лартнă. «Хурткăпшанкăсем пек ĕрчесе пыракан аялти расăри халăхсене миллионĕ-миллионĕпе вĕлерсе пĕтерме мана кам чарма пултартăр!»—тенĕ Гитлер.

«Пирĕн умра,—тенĕ Гитлер хăйĕн тусĕсене,—ют халăхсене чакарас тата нимĕç халăхне йышлантарас задача тăрать. Ют халăхсене чакармалли майсене шутласа тупмалла».

Çак майсене шыраса тупнă ĕнтĕ фашистсем. Вĕсем, нимĕç господисен çĕнĕ класне йышлатас, ăна аялти расăри çынсемпе «вараланма» парас мар тата аялти расăра шутланакан халăха пĕтерсе пырас тесе чăн та çине тăрсах тăрăшаççĕ. Çак тĕллеве пурнăça кĕртес тĕлĕшпе вĕсем чи тискер, вăтам ĕмĕрсенчи тискер ĕçсенчен те тискертерех ĕçсем тăваççĕ, çавăн пекех чи ирсĕр преступлениллĕ ĕçсем умĕнче те чарăнса тăмаççĕ.

Акă, хăшпĕр фактсем.

Фашистсен çĕрĕç министрĕ Дарре, сăмахран, господăсен çĕнĕ класне ăратлă выльăхсене ĕрчетнĕ пек ĕрчетме сĕнсе, çапла çырнă:

«Эпир, ăратлă ăйăрсемпе ăратлă кĕсресене суйласа илсе, авалхи ганноверски текен лашасене ĕрчетме пуçларăмăр. Çавăн пек обязательнăй йĕркепе чуптарсах эпир таса юнлă нимĕçсене те ĕрчетĕпĕр. Дворянсен çĕнĕ класне тăвасси вăл, чăннипе каласан, суйласа илнĕ çынсене чуптарасси пулать».

Ĕненме те хĕн, анчах факт! Çакна Германире чăнласах та пурнăça кĕртме пуçланă. Нумай çĕрте чуптармалли пунктсем уçнă. Унта производительсем вырăнне ятарласа суйласа илнĕ штурмовиксене, фашистла партин шыçса ларнă членĕсене тытса усраççĕ. Хĕрарăмсене çав пунктсене вăйпах иле-иле каяççĕ.

1933 çулта ятарласа кăларнă закон нимĕçсене негрсемпе, монголсемпе, еврейсемпе венчете кĕме чарать. Çак закона пăхăнман нимĕçсене судпа айăплаççĕ.

Раса тасалăхĕшĕн пыракан кĕрешÿ ячĕпе витĕнсе, фашистсем тĕлĕнмелле тискер ĕçсем тăваççĕ. 1934 çулти январĕн 1-мĕшĕнче, сăмахран, арçынсемпе хĕрарăмсене стерилизацилесси*) çинчен закон кăларнă. Çак закон тăрăх, икĕ çул хушшинче кăна, 1934—1935 çулсем хушшинче, 580 пин çынна стерилизациленĕ. Вĕсен шучĕ хальхи вăхăтра миллионран та иртсе кайнă ĕнтĕ. Стерилизаци законĕпе гитлеровецсем уйрăмăнах антифашистсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте усă кураççĕ.

Оккупациленĕ çĕршывсенче çак закон татах тискеррĕн ашкăнать. Сăмахран, пĕр 1940 çул хушшинче кăна Польшăра пине яхăн хĕрачана стерилизациленĕ. Стерилизациленĕ хĕрачасен шучĕ Чехословакире те калама çук нумай. Стерилизациленĕ хыççăн вĕсене е Германие, е хăйсен çĕршывĕнчи публичнăй çуртсене хăвала-хăвала каяççĕ.

Фашистсем çитĕннĕ çынсене кăна мар, ачасене те стерилизацилеççĕ. Шкулти вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайман ачасене стерилизацилесси çинчен ятарласах закон кăларнă.

Çакăн пек тискер ĕçсене тума фашистсем тахçанах хатĕрленнĕ пулнă. 1931 çултах ĕнтĕ вĕсем Германири мĕнпур халăхăн виççĕмĕш пайне стерилизацилесси çинчен калаçа пуçланă.

1935 çулти сентябрĕн 15-мĕшĕнче фашистсем татах тепĕр закон кăларнă.

Ăна «нимĕç юнĕпе нимĕç тивĕçлĕхне сыхласси çинчен калакан закон» тесе ят панă. Çак закон вара Германири пĕтĕм хĕрарăмсене тăвата пая пайлать. Пĕрремĕш класра, паллах ĕнтĕ, çÿлти расăри хĕрарăмсем тăраççĕ. Вĕсене пысăк правăсем панă. Çÿлти расăри арçынсемпе мăшăрланас тĕлĕшрен вĕсемшĕн нимĕнле чару та çук.

Иккĕмĕш класри хĕрарăмсен прависене кăштах пÿлнĕ: вĕсем иккĕмĕш сортри нимĕçсемпе кăна мăшăрланма пултараççĕ.

Виççĕмĕш класри хĕрарăмсем те ача тухма пултараççĕ, анчах çуратма вара вĕсен право çук. Вĕсем стерилизациленĕ арçынсене кăна качча тухма пултараççĕ.

Тăваттăмĕш класра тăракан хĕрарăмсене качча тухма пачах чарнă. Вĕсене стерилизацилеççĕ кăна.

Арçынсем тĕлĕшпе те çавнах калас пулать. Аялти раса шутне кĕртнĕ рабочисемпе хресченсене авланма чараççĕ. Авланас пулсан та, вĕсем стерилизациленĕ хĕрарăмсене кăна качча илме пултараççĕ.

Çак закон тăрăхах тата кашни кил валли «çемье кĕнекисем» тунă. Вăл кĕнекесем çине çав çемьери çынсем мĕнле раса шутĕнче тăнине çырса хураççĕ.

Упăшкипе арăмĕ те «ют расăсенчен» пулсан, вĕсене иккĕшне те стерилизацилеççĕ. Упăшкипе арăмĕ иккĕшĕ те «ариецсем» пулсан тин вĕсене йĕркеллĕн пурăнма ирĕк параççĕ.

Çапла вара, фашистла ирсĕрсем государствăн политикăллă пурнăçне кăна мар, çемье пурнăçне те чăрсăррăн хутшăнаççĕ, миллионшар çынна ирсĕр мăшкăл тÿстереççĕ.

Ку та сахал-ха. Фашистсем, юншăн хыпса çунакан урнă çăхансем, аялти раса шутне кĕртнĕ халăхсене пĕтĕмпех пĕтересси çинчен те нимĕн вăтанмасăр калаçаççĕ. Çак тискер ĕçе вĕсем халĕ хăйсем йышăнса илнĕ çĕршывсенче чăннипех те пурнăça кĕртсе пыма пуçларĕç. Çакна ĕнтĕ Молотов юлташ ют çĕршывсен посолĕсем патне янă нота уйрăмăнах уççăн кăтартса парать.

Ватăлса е тĕрлĕрен чир-чĕрпе сиенленсе ĕçлеймен пулнă çынсене сыватма кирлĕ марри çинчен те фашистсен «теоретикĕсем» чĕлхе ывăниччен сÿпĕлтетеççĕ. Пĕр иртнĕ кĕркуннехи виçĕ уйăх хушшинче кăна фашистсем çавăн пек чирлĕ çынсене 85 пин çынна ытла вĕлернĕ.

Халăх сывлăхĕшĕн тăрăшакан чăн-чăн врачсене фашистсем хĕсĕрлеççĕ, ĕçрен кăлара-кăлара яраççĕ.

Гитлер тата унăн шайки: пĕтĕм тĕнчере «ариецсем» кăна пуçпулса тăма пултараççĕ, тесе ĕнентерессшĕн. Мĕншĕн тесен вĕсем чи вăйлă, чи таса юнлă, чи ăслă, чи пултаруллă, чи культурăллă халăх пулса тăраççĕ имĕш.

Çак вĕрентĕве тĕрĕс вĕрентÿ вырăнне хурса йышăнма пулать-и-ха? Çук, пулмасть. Халăхсем хушшинче пĕр-пĕр раса уйрăмах палăрса тăма пултарайманнине наука тахçанах кăтартса панă ĕнтĕ. Мĕншĕн тесен тĕнче культурине тăвас çĕрте пĕр-пĕр халăх кăна мар, çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур халăх ĕçленĕ, çĕр чăмăрĕ çинчи кашни халăхах тĕнчене мĕн те пулин панă. Тĕнче культурине çавтери паха тĕслĕхсем хывнă государствăсенче нумайĕшĕнче пĕр «ариец» та пулман. Сăмахран, египтянсем, Месопотами халăхĕсем, авалхи индуссем, вĕсем «ариецсем» пулман пулин те, тĕнчене культурăн çавтери паха тĕслĕхĕсене парса хăварнă. Çĕр ĕçлемелли плуга чи малтан Вавилонири семитсем шухăшласа кăларнă пулнă. Халĕ эпир усă куракан кăстăрчăка Ассирире шухăшласа кăларнă. Пăшал пемелли тар, компас тата çырмалли хут тума малтан авалхи Китайра вĕреннĕ, Центральнăй Африкăри негрсем тимĕр рудисене шăратма вĕрентсе хăварнă. Çыру алфавитне те нимĕçсем мар, финикиецсем шухăшласа кăларнă. Кĕпе-йĕм тăхăнса çÿреме арабсенчен вĕреннĕ.

Нимĕç фашисчĕсем мухтакан сурçĕрти расăна илес пулсан, вĕсем вара, пачах урăхла, варварсем кăна пулнă.

Çапла вара, тĕнчери мĕнпур культурăна нимĕçсем тунă текен, çавăнпа та вĕсем чи пултаруллă, чи малта тăракан раса пулса тăраççĕ, текен суя «теорие» истори тахçанах ÿпĕнтерсе хунă. Пĕр-пĕр халăх халлĕхе культура тĕлĕшĕнчен ыттисенчен аялтарахра тăрать пулсан, çакăн сăлтавне биологире мар, историре шырама кирлине наука тахçанах кăтартса панă. Çакна пирĕн çĕршыври халăхсем татах тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Гитлеровецсем, раса теорийĕпе витĕнсе, этемлĕх халиччен курман преступлениллĕ ĕçсем тăваççĕ. Анчах та гитлеровецсем нумай ашкăнаймĕç. Часах акă вĕсенчен тĕнче тивĕçлĕ ответ ыйтĕ.

«Гитлерла Германин правительстви, Совет Союзĕ çине ултавлăн килсе тапăннăскер, вăрçăра пĕтĕм тĕнчери правăсен нимĕнле нормисене те пăхăнмасть, этем моралĕн нимĕнле правилисене те пăхăнмасть. Вăл нимĕнрен малтан мирлĕ пурнăçпа пурăнакан хĕçпăшалсăр халăха хирĕç, хĕрарăмсене, пĕчĕк ачасене, старикесене хирĕç çапăçать, çапла тунипе хăйĕн вăрă-хурахла сăн-питне тата ытларах палăртса пырать. Çак вăрă-хурахла правительствăна, вăйпала усă курса пусмăрлама тата çаратма кăна пĕлекенскере, ирĕклĕхе юратакан халăхсен хăйсен пĕтĕм хăватлă вăйĕсене пухса тĕпĕ-йĕрĕ юлмиччен çапса аркатмалла. Çав халăхсем хушшинче совет халăхĕсем хăйсен ирĕке тухас пысăкран та пысăк задачине вĕçне çитиех пурнăça кĕртĕç». (Молотов юлташăн нотинчен).

Тĕнче сучĕ умĕнче гитлеровецсем тÿрре тухаймĕç, тăкнă юншăн вĕсем хăйсен юнĕпе ответлĕç.

Р. МАЛЮТИН.

*) Стерилизаци — çынсен ĕрчес пултарулăхне пĕтерни.

ИДЕН ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче тухса каланă. Вăл нумаях пулмасть хăй радио тăрăх каланă сăмахне аса илнĕ. Гитлер инкекĕ — вăл хăйсен çĕршывĕ ăшĕнче нацист пулнинче мар, вăл хăйĕн çĕршывĕпе кăна чарăнса тăманнинче пулать, тенĕ ун чухне. «Çак сăмах витĕмсĕртерех, — тенĕ Иден.—Нацистсем малтан пуçласа вĕçне çитиех агрессорсем тата вĕсем хăйсен çĕршывĕпех ниепле те чарăнса тăман пулĕччĕç». Иден каланă тăрăх, вăл, тĕрĕссипе, нацистсем агрессиллĕ выльăхсем мар тесе каласшăн пулман.

Англия Российăна янă хĕçпăшал вырăссен вăрçă ĕçĕсенче пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен пĕлтернĕ хыççăн, Иден малалла çапла каланă: «Правительство Инçетри Хĕвелтухăç тĕлĕшпе ответлăха пĕтĕмпех хăй çине илет. Эпир Сингапура шута хуман е ун çинчен маннă тени тĕрĕс мар. 1939 çултан пуçласа пирĕн вăйсене темиçе хут ÿстернĕ. Вăрçă ĕçĕсем пуçланиччен палла решени йышăннă, çав решение ун чухне нациллĕ интерессене хисепе хурса йышăннă. Правительство çак ыйтăва тĕплĕн сÿтсе явма хатĕр».

Хăй Мускава кайса килни çинче чарăнса тăрса, Иден çапла каланă: «Сталинпа Молотов пире хăйсен питĕ нумай вăхăтне пачĕç тата калаçусем нумай ыйтусене пырса тиврĕç. Эпĕ çакăн чухлĕ нумай темăсем сÿтсе явни хăçан та пулин пулнине астумастăп. Сталин — питĕ уçăмлă та ăслă çын, вăл хăй пăхса тухакан пур ыйтусене те—политикăллă ыйтусем-и вĕсем е вăрçă ыйтăвĕсем-и—питĕ лайăх пĕлет. Эпир пĕр-пĕрин шухăшĕсемпе паллашрăмăр, ман шутпа вара, вăрçăпа çыхăнса тăракан пур ыйтусем тăрăх та тенĕ пекех икĕ енĕ те хăйсене интереслентерекен результатсем патне пырса тухрĕç.

Эпĕ хамăрăн тăлмача — Совет Союзĕн посолне пысăк хак парасшăн, вăл хăйĕн йывăр задачине нумай тĕрлĕ тата вăрăма пынă калаçусенче ывăнма пĕлмесĕр тата пĕр йăнăшсемсĕр пурнăçласа пычĕ». (Çак сăмахсене каланă чухне Майский дипломатсен ложинче пулнă. Иден сăмахĕсене палата алă çупса йышăннă).

Иден унтан Криппс посол хутшăнса ĕçлени питех те паха пулнине кăтартса панă. Кун хыççăн вырăссем хăналантарса янине питĕ мухтанă.

Мускавра Ней генерал çар сыннисемпе туса ирттернĕ калаçусем,—тенĕ малалла Иден,—хăй вăхăтĕнче лайăх çимĕçсем памалла. Иден малалла, Дон бассейнĕнче чаплă çитĕнÿсем тунă хыççăн Мускава пынă Тимошенко маршалпа, çавăн пекех тата Ворошилов маршалпа, Хĕрлĕ Çарăн, тинĕсçар флочĕн тата сывлăш-çар вăйĕсен руководителĕсемпе курăнни çинчен каланă. Ней генерал Хĕрлĕ Çар генеральнăй штабĕн начальникĕпе курăнса калаçнă. Российăна хĕçпăшалсем йĕркеллĕ пырса тăраççĕ. Малалла Иден çапла каланă: «Эпир Российăра аслă командирсене те, кĕçĕн командирсене те куртăмăр, салтаксене те, халăх руководителĕсене те куртăмăр. Эпир пур çĕрте те пĕр пекех шанăçлăх пуррине, хăюллăн тăнине тĕл пултăмăр. Хĕрлĕ çар пек çукаçа нумай вăхăт хушши тата йывăррăн каялла чакса пынă хыççăн çапах та боевой шухăш-кăмăла сыхласа хăварнине, тем сарлакĕш фронт талккăшĕнче триумфлă çитĕнÿсем туса тăшман çине сиксе ÿкме пултарнине кăтартакан примерсем истори анналĕнче сахал тупма пулать. (Алă çупаççĕ). Çакă вăл 1812 çултинчен те чаплăрах паттăрлăх. Вырăс салтакĕ чăтăмлă, вăл кирек-мĕнле лару-тăрăва та хăнăхма пултарать. Нимĕç захватчикĕ çакăнпа танлашасси çинчен ĕмĕтленме те пултараймасть.

Вырăс климатĕнче тÿсĕмлĕх мĕне пĕлтернине кăтартса парас шутпа Иден финсен чиккинчи чугунçулпа кайнă чухне сивĕ 30 градуса çитни çинчен каланă. Малалла вăл çапла каланă: «Пирĕн вырăс хуçисем, сыхланулла пулас шутпа, пирĕн поезд вĕçне уçă платформа кăкарса янă, ун çине зенитнăй орудисем лартнă. Çакăн пек сивĕ çанталăкра уçă платформа çинче ларса пырасси мĕне пĕлтернине палата хăех чухласа илме пултарать ĕнтĕ».

— Юлашки вăхăтра Российăра пулса иртнĕ событисем чылай тĕлĕштерен ăнсăртран килнĕ тесе шутлани питех те пысăк йăнăш пулĕччĕ, тенĕ Иден.—Пĕрре те апла мар. Вăрçă телейлĕ улшăнасси нумай фактсенчен килнĕ. Пĕтĕм çу тăршшĕнче тата хĕрхуйне пуçламĕшĕнче вырăссем пĕрмаях çапăçса каялла чакса пычĕç тата хальни май килнĕ хушăрах тăшман вăйне çухату курсе пычĕç. Иккĕмĕш фактор—пĕтĕмпех çунтарса хăварас политикăна тытса пыни—çакă вăл нимĕç войскисен снабжени ĕçĕнчи йывăрлăхсене, сăмах та çук, ÿстернĕ, вĕл çыхăнарса пынăçемĕн çав йывăрлăхсем татах та ытларах ÿснĕ. Виççĕмĕшĕнчен—партизансем пур. Вĕсем тăшман тылне пĕрмаях хăратса тăраççĕ. Юлашкинчен—хĕл пур. Анчах кусем те пĕтĕмпех мар-ха. Вырăссем çапăçса каялла чакса пынă чухне тылра çĕнĕ çарсем тума пуçларĕç. Ш... та çак çĕнĕ çарсем çапăçăва кĕреççĕ те халĕ. Нимĕçсене Мускав фронтĕнче хĕссе пыракан дивизисем вĕсем—çĕнĕ дивизисем. Каялла чакса пыракан нимĕçсем вăйсăрланни тата советсен çĕнĕ дивизийĕсем пырса çитни—çаксем вăрçă телейĕ улшăнасси патне илсе пынă. Ку вăл—вырăс руководителĕсем: малашне текех ăнăçсăрлăхсем пулмаççĕ, Германи çарĕ хăйĕн хăватне текех сыхласа хăварас çук, тесе гаранти пама шутлаççĕ тенине пĕлтермест. Германи çарĕ питĕ вăйлă-ха. Ку вăл çакна пĕлтерет: хальхи вăхăтра Германин Российăри çарĕ текех июнĕн 22-мĕшĕнчи çар мар. Çакă вăл пирĕншĕн пуриншĕн те питех те кирлĕ обстоятельство.

— Мускавра пулнă чухне,—тенĕ малалла Иден,—эпĕ Англин Тегеранри тата Анкарари дипломатиллĕ представителĕсене те Мускава пыма ыйтрăм, мĕншĕн тесен эпĕ нимĕçсем Турцире, уйрăмăнах эпĕ Мускава пынă май, сехĕрленÿ кăларма хăтланĕç тесе шутларăм. Çапла шутланипе эпĕ йăнăшман мĕн. Эпĕ хамăрăн Анкарари представителе хамăрăн калаçусем çинчен, Турци çинчен асăннă сăмахсем çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе отчет парасшăнччĕ. Хăй вăхăтĕнче пирĕн посол кун пирки Турци министрĕсемпе калаçнă. Хальхи вăхăтра çакна каласан та çителĕклĕ пулмалла: пирĕн калаçусенче Турци çинчен туслă сăмахсемпе асăнса илнĕ,—çакăн çинчен Турци правительстви савăнсах илтнĕ пулĕччĕ. Союзниксем çĕнтерессинчен туроксен нимĕн хăрамалли те çук. Вĕсен территорийĕ нимĕн чухлĕ те тĕкĕнмесĕр юлать; Англипе Совет Союзĕ Турци тĕлĕшĕнчен 1941 çулти август уйăхĕнче илнĕ обязательствăсем çаплипех юлаççĕ. Совет Союзĕ тата эпир Турцие вăйлă та чечекленсе пыракан çĕршыв тăвасшăн. Ататюрк çĕнĕ Турци тĕлĕшпе кăларса тăратнă принципсем Российăпа Турция пĕрпĕрне лайăх ăнланнине палăртса тăраççĕ. Çакăн пек политикăн ăслăлăхĕ вăрçă кăларса тăратма пултаракан инкексем умĕнче куллен-кун ытларах та ытларах куçа курăнакан пулса пырать.

Сикорский Мускавра пулни çинчен каланă чухне Иден çапла пĕлтернĕ: çакна Совет правительстви питех те ырланă, вăл союзниксем хушшинчи пĕрлешÿхăшлăха тĕреклетес енĕпе çĕнĕ ĕç пулнă, тенĕ.

Юлашкинчен Иден çапла каланă: «Эпир Мускавра вăрçă хыççăнхи мире организацилесси çинчен калаçрăмăр, çак калаçусем малашлăхшăн питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрĕç, тесе шутлатпăр эпир. Халĕ çак ĕçе малалла туса пырас пулать. Хальхи вăхăтра пулса пыракан событисем пирĕн халăхсене пĕр-пĕринпе çывхартаççĕ тесе шутлатăп. Государство деятелĕсен событисен аталанăвне икĕ çĕршыври халăхсемшĕн те лайăх пулмалла çулпа илсе пымалла тăвас пулать, çак событисен аталанăвĕ союзниксен вăрçă ĕçĕсене ăнăçусем кÿмелле тата пĕтĕм тĕнчешĕн нумай вăхăта мир кÿмелле пултăр. Пирĕн калаçусем çак тĕллевсем патне пыма паллă тăрăм пулăшрĕç пулĕ тесе шутлатăп, çавăнпа та эпĕ Мускаври калаçусене хутшăннă пирхи савăнăçлă». (Алă çупаççĕ).

ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН ЮТÇĔРШЫВ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçат Хĕрлĕ Çарăн Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи çĕнтерĕвĕсене пит пысăк хак парса çырать. Хаçат çапла кăтартса парать: Гитлер, хăйĕн войскисене пĕтĕм вăя хурса çапăçма чĕнсе, нацистсен партин малашлăхне тата хăйĕн личнăй влиянийĕпе престижне пĕтес е пулас шăпа умне пырса тăратать. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи «кăмăла кайман лару-тăруран» хăтăлсанах, пур ĕçсем те лайăх кайĕччĕç, тесе калать Гитлер. Анчах салтаксем çакна ыйтма пултараççĕ: çавăн пек «кăмăла кайман лару-тăру» ăшне вĕсене кам тĕксе кĕртрĕ-ха? Германи çарĕ умĕнче Гитлер авторитечĕ аялалла ÿксе пырать. Гитлер хĕллехи кампани пуласса кĕтмен, çав кампание хатĕрленмен вăл. Шухăшлама пултаракан нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсенчен кашниех çакна курĕ: Германи çарне вилĕм тупмалли наступление тĕксе кĕртсе яраканни—Гитлер алли пулнă.

СТАМБУЛ, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла ордисене хăватлăн пыра-пыра çапни Турци пичетне пысăк шухăшсем патне илсе пырать. «Вакыт» хаçат çапла çырать: «Нимĕçсене Российăра тÿсме лекнĕ йывăрлăхсем малтан шутланинчен нумай ытларах пулчĕç. Ун çинчен çак фактсем пит те уçăмлă кăтартса параççĕ: вырăссем Керчьпе Феодосие каялла туртса илчĕç тата стратегиллĕ пит те кирлĕ пункт пулса тăракан Калуга хулинчен те нимĕçсене хăваласа кăларчĕç»,—тет. «Хабер» хаçат çапла çырать: «Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен килекен хыпарсем пĕрин хыççăн теприн пысăкланнăçемĕн пысăкланса пыракан ĕçсем çинчен калаççĕ. Иккĕленмелли çук: вырăссен наступленийĕ вăрçă мĕнле пĕтес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрĕ». Хаçат Германи планĕсем путланса пынине кăтартакан нумай фактсем çинчен асăрхаттарать. Вăл çапла çырать: «Тавлашмалли çук, нимĕçсем хăйсен кампанийне хĕл ларичченех пĕтерессине хытă шанса тăнă. Гитлер хăйĕн планĕсене çакăн çине шанса туни — чăннипех пит те пысăк йăнăш пулнă. Германи çарĕсем каялла чакса пынине хĕл çитнипе пулнă ĕç теме çук. Чăнах та, епле калăн ĕнтĕ Крымра шартлама сивĕсем тăраççĕ, тесе. Халь ĕнтĕ пуçарулăх пĕтĕмĕшпех вырăссен аллинче», тет хаçат.

Германия Венгрие хĕсни

Риббентроп Будапешта пынă майпа

ЖЕНЕВА, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). Будапештран пĕлтернĕ тăрăх, Германин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп Будапешта пынă. Вырăнти журналистсем: Риббентроп кĕтмен çĕртенех Будапешта пыни Германи войскисем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче поражени тÿснипе питĕ тачă çыхăнса тăрать, тесе палăртаççĕ.

Риббентроп, Гитлер ячĕпе калаçса, Венгрирен çĕнĕ пулăшу, уйрăмах утлă çар вăйĕсем, илме тăрăшать. Венгри правителĕсем Хортипе Бардоши çапла шутлаççĕ: Риббентроп Будапешта килни питĕ вырăнлă та вăхăтлă, мĕншĕн тесен Венгрия салтаксем панăшăн Венгрипе Румыни хушшинчи тавлашусене татса панă чухне Германия Венгри майлă пулĕ, тесе шухăшлаççĕ.

Риббентроп Будапешта пыни Венгри çарне те, Венгрири мĕнпур халăха та питĕ пăшăрхантарать.

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн Цюрихри корреспонденчĕ çапла çырать: Риббентроп Будапешта пыни Румынипе Венгри хушшинчи отношенисем çивĕчленсе кайнипе çыхăнса тăрать, тесе шутлаççĕ. Хăшпĕр сведенисем тăрăх, Антонеску нимĕçсене çапла каланă пулать: çитес çывăх вăхăтсенчех «Румыни валли мĕн те пулин тумасан», эпĕ Румыни çарне Трансильвание кĕртсе яма шухăшлатăп, тенĕ.

Корреспондент çапла çырать: Антонеску Венгри çарĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ямалла тăвасшăн, çакăншăн вара вăл Румынин Венгрие хирĕçле ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ чухне Германирен пулăшу илессе шанать.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ çапла çырать: Германин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп Будапештра Венгри правительстви умне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Венгри войскисен хисепне пысăклатма требовани кăларса тăратнă.

Венгрия Германи требованийĕсене пурнăçа кĕртсен, вара Трансильвани тĕлĕшпе çеç мар, Югослави Баначĕ тĕлĕшпе те ыйтăва Венгри майлă татса пама сăмах панă пулать Риббентроп.

Гитлера хирĕçле оппозици вăйланни

Женеваран (Швейцария) çапла пĕлтереççĕ: Германирен çитнĕ хыпарсем тăрăх, Браухича вырăнтан кăларнă хыççăн нимĕçсен чылай генералĕсем отставкăна тухас тесе заявлени панă. Анчах Гитлер вĕсем ыйтнипе килĕшмен. Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Кейтель генерал сасартăках чирлесе ÿкнĕ. Браухичпа çывăх тăнă темиçе офицера, вăл шутра унăн адъютанчĕсем пулнă икĕ офицера та, арестленĕ. Германи генералитечĕнчи оппозициллĕ элементсене асăрхаса тăрас шутпа Гиммлер нумаях пулмасть нимĕç генералĕсен хăйсен сыхлавçисен шутне ÿстермелле тесе распоряжени панă. Пĕлсе тăракан ютçĕршыв çыннисем çапла шутлаççĕ: нимĕç генералĕсем хушшинче юлашки вăхăтра Гитлера хирĕçле оппозици палăрмаллах вăйланса кайнă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсен чылай генералĕсене вырăнтан кăларасси çинчен калакан хыпарсем сарăлнă, Гитлер Гудериан, Леб тата Клейст генералсене çарти ертсе пырас вырăнтан кăларать тесе шутлаççĕ.

(ТАСС).

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çарĕç министерстви кăларнă коммюникере çапла пĕлтернĕ: Япони войскисем ĕнер хăйсен ĕçĕсене вăйлатрĕç. Япони командованийĕ фронта çине-çинех çĕнĕ çар чăсĕсем кĕртсе тăрать. Урăх паллăсем тăрăх та Япони войскисем каллех наступлени тума хатĕрленмисисĕпет. Япони авиацийĕ ку вăхăтра разведкăллă вĕçевсем çеç туса ирттерет. Ĕнер Минданао утравĕн çыранĕсем патĕнче Япони ăранĕсем йышлăн курăнни — японецсем çак утрав çине çĕнĕ десант антарма пултарассине кăтартать. Ытти районсенче пысăк операцисемех çук.

АНГЛИ ПĔЛТЕРЕВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕн коммюникинче çапла кăтартса панă: Малайăри фронтра нимĕнле улшăнусем те пулман. Ĕнер Япони авиацийĕ Малайăра чылай объектсем çине тапăннă. Чугунçул çине бомбăсем пăрахнă. Паян ирхине Сингапурта тăшман сывлăшран тапăннине систерекен тревога пулнă. Ĕнер Англи авиацийĕ кунĕпех патруль тата разведка туса вĕçсе çÿренĕ.

ЛОНДОН, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешекен оборона штабĕн коммюникинче çапла пĕлтернĕ: юлашки 24 сехет хушшинче Япони авиацийĕ хăйĕн пысăк активлăхне кăтартрĕ. Рангун çывăхĕнчи аэродром çине тапăнса бомбăсем пăрахнă. Анчах та бомбăсем тĕллесе пемелли вырăнсенчен аякка ÿке-ÿке çуралнă.

Англи çарĕсен Рангунри командованийĕн коммюникинче Англи самолечĕсем японецсен аэродромне атакăлани çинчен пĕлтернĕ. Ку атакăра японецсен çĕр çинче ларакан 3 бомбардировщикне çĕмĕрсе тăкнă тата темиçе самолетне сиенленĕ. Англи самолечĕсем хăйсен базине пурте тĕрĕс таврăннă.

Паян ирхине Англи самолечĕсем Японин тепĕр аэродромне атакăланă. Ку аэродром çинче японецсен икĕ истребительне çĕмĕрсе тăкнă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Япони войскисем авиаци пулăшнипе Куала-Лумпур хули еннелле куçса пыраççĕ. Ĕнер ирхине вĕсем Куала-Лумпуртан 45 километр кăнтăрпа хĕвеланăç енче ларакан Нура патнелле тата Куала-Лумпуртан 25 километр хĕвеланăç еннелле ларакан Кланг пункчĕ патне çитнĕ. Японецсен урăх чăсĕсем Куала-Лумпуртан 20 километр çурçĕрпе хĕвеланăç енче ларакан Равангу патне çитнĕ. Япони авиацийĕ Сингапур районĕнчи тĕрлĕрен объектсем çине çаплах вĕçсе пыра-пыра тапăнать.

Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: январĕн 8-мĕшĕнче англичансен малти чăсĕсем противникăн Эль-Агейле патнелле чакакан тĕп вăйĕсене хÿтĕлесе пыракан арьергардри чăсĕсене хĕссе пынă. Аджедабипе Эль-Агейле хушшинчи тĕп çулран çурçĕрелле те, кăнтăралла та противник вăйлăн хирĕç тăрать, противникăн куштан кăнтăр еннерехри чăсĕсем ун пекех вăйлăн хирĕç тăраймаççĕ. Англи çарĕсем Аджедабирен хĕвеланăçнелле куçса пырасси противник фронтăн пĕтĕм сарлакĕшĕпе минăсем лартса тултарнă пирки вăраххăнлăнчĕ.

Хальфайя районĕнче Англин тинĕсçар судновĕсем, Англин артиллерийĕпе тата авиацийĕпе тачă пĕрлешсе, противникăн позицийĕсем çине кунĕпех вăйлăн персе тăнă.

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: январĕн 9-мĕшĕнче противник çаплах Эль-Агейле патнелле чакса пынă. Аджедабирен кăнтăр-хĕвеланăç енче англичансен колоннисем противникăн подразделенийĕсене атакăланă. Çав подразделенисем противникăн тĕп вăйĕсем чакса пыракан çулсене хÿтĕлекен позицисене йышăнса тăнă пулнă. Противник ытла та пысăк хăвăртлăхсемпе чакса кайнă пирки Англин малта пыракан чăсĕсем вĕсене хăваласа çитсе çапăçу пуçласа яма пултарайман.

Комсомолпа физкультурăн хулари активĕн пухăвĕ

Кăçалхи январĕн 10-мĕшĕнче комсомолпа физкультурăн Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулчĕ. Унта профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулакан кросне ирттерме хатĕрленес ĕç мĕнле тăни çинчен ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ (вăлах ВЛКСМ хула комитечĕ çумĕнчи çарпа физкультура енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ) Никишева юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх пренире 12 çын тухса калаçрĕ. Тухса калаçакансем хулари хăшпĕр организацисем (НКВД, Фармшкола, Столовăйсен тресчĕ, Кожупряжь завочĕ) кроса ирттерме хатĕрленме тытăннине палăртрĕç. Ку организацисенче подразделенисем туса йĕркеленĕ, кросра пулмалли çынсене медицина енĕпе тĕрĕсленĕ, халĕ тренировкăсем туса ирттереççĕ.

Анчах комсомолăн чылай организацийĕсем (Ялхуçалăх институчĕ, Çĕрĕç халăх комиссариачĕ, Сутĕç халăх комиссариачĕ, Финанс халăх Комиссариачĕ тата хулари шкулсем) хатĕрленÿ ĕçне кирлĕ пек тытăнман. Хăшпĕр пуçламĕш организацисенче кроса хатĕрленсе ирттерес ыйтăва пухура та сÿтсе явман. Арçынсене, хĕрарăмсене, çамрăк ачасене подразделенисем тăрăх уйăрман. Кросра пулмалли çынсене медицина енĕпе тĕрĕслесси йĕркеллĕ иртмест. Килте йĕлтĕрсем тăвас ĕçе пуçăнман.

Комсомолăн тата физкультурăн хулари активĕ пуçламĕш организацисен секретарĕсене, спорт обществисен руководителĕсене, физкультура коллективĕсен организацийĕсене январĕн 14-мĕшчен кроса хатĕрленес ыйтăва пухусенче сÿтсе явма хушса хăварчĕ. Пуху кашни комсомолец, физкультурник, профсоюз членĕ кроса хутшăнса, йĕлтĕрпе ГТО значокĕн нормине памалла тесе йышăнчĕ. Январĕн 14-мĕшчен пур организацисенче те кросăн положенине вĕренсе çитерме, çынсене медицина енĕпе тĕрĕслесе, январĕн 20-мĕшчен командăсем тăрăх уйăрма хушрĕ.

Актив пухăвĕ январĕн 25-мĕшне кроса хатĕрленсе çитнине тĕрĕслемелли кун тăвас тесе йышăнчĕ, хатĕрленÿ вăхăтĕнче комсомол организацийĕсем тата уйрăм комсомолецсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма кирлине палăртрĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ

КОММУНАЛЬНО-СТРОИТЕЛЬНЫЙ ТЕХНИКУМ

об'являет дополнительный прием студентов на I, II и III курсы

НА 1941—1942 УЧЕБНЫЙ ГОД

Техникум готовит техников-строителей по промышленному и гражданскому строительству,

Срок обучения 3 года. Прием заявлений с 5 января по 25 января. К заявлению должны быть приложены следующие документы:

а) автобиография;
б) свидетельство об окончании НСШ (в подлиннике);
в) три фотокарточки (снимок без головного убора);
г) свидетельство о рождении;
д) справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных);
е) паспорт пред'является при личной явке.

На первый курс принимаются без испытаний:

а) окончившие НСШ в 1941 году;
б) 8 и 9 классы средней школы.

На второй курс принимаются без испытаний окончившие полную среднюю школу (десятилетка, рабфак, училище, школа для взрослых) с условием обязательной сдачи в течение второго семестра общетехнических и специальных дисциплин, входящих в программу первого курса.

На третий курс принимаются ранее учившиеся в техникуме и не окончившие его по каким-либо причинам.

Студенты общежитием не обеспечиваются. Приезжим оплачиваются квартирные в размере 20—25 рублей в месяц.

Начало занятий 8-го февраля 1942 года.

Заявления направлять по адресу: г. Чебоксары, Чувашской АССР, улица Ярославская, 54. Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум.

Для ответов должны быть вложены в конверты почтовые марки на 60 коп.

ДИРЕКЦИЯ.

3—1

ГОССТРАХ СССР

ВКЛЮЧАЙТЕСЬ
В КОЛЛЕКТИВНОЕ
СТРАХОВАНИЕ ЖИЗНИ
ПО МЕСТУ РАБОТЫ

СТРАХОВАНИЕ ПРИНИМАЕТСЯ В 5000, 4000, 3000, 2000, 1000 И 500 РУБЛЕЙ НА КАЖДОЕ ЛИЦО. ПО ЖЕЛАНИЮ КОЛЛЕКТИВА.

СТРАХОВЫЕ ВЗНОСЫ УСТАНОВЛЕНЫ В РАЗМЕРЕ 12 РУБЛЕЙ В ГОД ЗА КАЖДУЮ ТЫСЯЧУ РУБЛЕЙ И УПЛАЧИВАЮТСЯ СБОРЩИКУ КОМСОДА ВПЕРЕД ЗА КАЖДЫЙ КВАРТАЛ.

ЗА СПРАВКАМИ ОБРАЩАТЬСЯ В РАЙОННЫЕ И ГОРОДСКИЕ СТРАХОВЫЕ ИНСПЕКЦИИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çыруçемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 819 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 2, Ф 6. 58 84 п. л.